Ц. Б. им.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 АПРЕЛ 8 ЕРНЕКУН 80 (4893)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн халăх хуçалăхĕн 1938 çулти планĕ çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Л. С. СПАСĂВ йулташ Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕн Х-мĕш Çеççийĕнче 1938 çулти апрелĕн 3-мĕшĕнче тунă доклад

Йулташсем! Пирĕн çĕршыври рабочи класпа ĕççыннисем, Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе, коммунисăмла обшчĕства тăвассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Коммунисăмăн пĕрремĕш сыпăкне—социалисăма епĕр ĕнтĕ тĕпрен илсен туса хутăмăр, социалисăм пурнăçа, халăхăн кулленхи йăлине кĕчĕ.

Çав задачăна пурнăçа кĕртме сталинла икĕ пилĕкçуллăх хушши ĕçлесе пынă. Çак çулсенче пит нумай тунă. Чи малта тăракан техникăлă социалисăмла промышлĕннăç тунă,—вăл калама çук ырă та малта тăракан промышлĕннăç; совхозсемпе колхозсен никĕсĕ çинче малта тăракан йалхуçалăхĕ тунă; експлоататăрла классене пĕтернĕ; совет халăхĕн культури гигантла хăпарчĕ. Епĕр çĕнĕ пурнăçа йăвăрлăхсемпе кĕрешсе туса пыратпăр. Çĕмĕрсе тăкнă клас тăшманĕсен йулашкийĕсем, халăх тăшманĕсем—пур майпа та пире сатăрлама, социалисăм строительствине ăнăçлăн туса пырассине чăрмантарма тăрăшаççĕ. Çавăн пек йăвăрлăхсем пур пулсан та епĕр çавсене пурне те турăмăр пулсан, ку вăл ĕнтĕ пирĕн рабочи клас вăйне, пирĕн партин вăйне, Тĕп Комитетпа правительствăн вăйне тата халăхсен çулпуçĕн Сталин йулташăн аслăлăхне кăтартса тăрать.

Пирĕн Чăваш республикĕ,—Совет Союзĕн уйăрăлми пайĕ,—хамăр çĕршывра çĕнĕ обшчĕствă, социалисăм тунă çĕрте пĕчĕк мар вырăн йышăнса тăрать. Пирĕн республика социалисăм çуртне тунă çĕре сахал мар стройилсем хучĕ. Хамăр çĕршывра социалисăм тунă çĕре хутшăнса активлă ĕçлесе пырса, вăл, пĕтĕм Совет Союзĕ пулăшнипе, политикăпа хуçалăх тата культурă тĕлĕшĕпе паллама çук ÿсрĕ.

Пĕрремĕш пилĕкçуллăх планне, есĕр пĕлетĕр, срукчен малтан, урăхла каласан 5 çулта мар, 4¼ çулта тултарнă. Иккĕмĕш пилĕкçуллăх планне те ĕçе тăтса паракан тĕп заданисем тăрăх, срукчен малтан тултарнă.

Сталинла икĕ пилĕкçуллăхра епĕр темиçе пин çĕнĕ савăтсемпе хапрăксем туса лартрăмăр. Халĕ ĕнтĕ епĕр çав савăтсемпе хапрăксенчен пĕтĕм промышлĕннăç продукцин 80 процентне илетпĕр. Металл шăратнине илсен, шăратса кăларакан кашни пин тоннă металлран 966 тоннă çĕнĕ савăтсем парӑççĕ, кашни пин станокран—933 станокне çĕнĕ савăтсем параççĕ, кашни пин штук йалхуçалăх машинисенчен—953 штукне çĕнĕ савăтсем параççĕ.

Трактăрсене, комбайнсене, автомобилсене тата самолётсене пĕтĕмпех сталинла икĕ пилĕкçуллăхра туса лартнă çĕнĕ савăтсем тăваççĕ.

Халĕ ĕнтĕ епĕр хамăрăн государствăна валли, хамăр çĕршывăн оборонине валли, хамăрăн халăха валли мĕн кирлине пурне те хамăрăн совет савăчĕсемпе хапрăкĕсенче, хамăрăн совет материалĕсенчен, хамăрăн совет çыннисен аллипе туса кăларатпăр.

Иртнĕ 1937 çул, стахановла иккĕмĕш çул, сталинла иккĕмĕш пилĕкçуллăхăн йулашки çулĕ пулчĕ, вăл çул иккĕмĕш пилĕкçуллăхăн заданийĕсене продукцийĕн пысăккăшĕ тĕлĕшпе срукчен тултарнипе, йалхуçалăхĕнче калама çук пысăк ÿсĕмсем тунипе, хамăр çĕршыври ĕççынни массисен культури малала хăпарнипе, вĕсен пурнăçĕ малала лайăхланнипе паллă пулчĕ.

ССР Союзĕн социалисăм строительствинчи ÿсĕмсем пирĕн республикă хуçалăхпа культурă тĕлĕшĕпе пит пысăк ÿсĕм тунинче те тÿррĕмĕнех тата йар уççăн курăнса тăраççĕ.

Чăваш республикĕнчи государствă промышлĕннăçĕн пĕтĕм продукцийĕ 1937 çулта, 1936 çултипе танлаштарсан, 1600 пин тенкĕлĕх хушăннă (ÿсĕм 3 процент).

Коопераци промышлĕннăçĕн продукцийĕ 4,5 мĕлйун тенкĕлĕх хушăннă (ÿсĕм 9,2 процент).

Електроенерги туса кăларни те ÿснĕ. 1937 çулта 4039 пин киловатт-сехет електроенерги туса кăларнă,—ÿсĕм 33,7 процент пулнă.

Ĕç тухăçлăхĕ те ÿснĕ. Пĕр рабочи продукци туса кăларни çакăн чухлĕ ÿснĕ:

Вырăнти промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕ тăрăх 41%
Апат-çимĕç промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕ тăрăх 15%
Çăмăл промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕ тăрăх 2%
Коопераци промышлĕннăçĕ тăрăх 29,1%

Ĕçукçин çулталăкри фончĕ ÿснĕ: Вырăнти промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕ тăрăх 25,8 процент, апат-çимĕç промышлĕннăçĕ тăрăх—2,7 процент, Çăмăл промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕ тăрăх—3,6 процент. Республикăри промышлĕннăç тăрăх вăтамран илсе шутласан ĕçукçи фончĕ 16,8 процент ÿснĕ.

Тавар çавăрнăшĕ 15,1 процент ÿснĕ, тавар çавăрнăшĕн пысăккăшĕ 281,6 мĕлйун тенке çитнĕ.

Иртнĕ çулталăк хушшинче 16 çĕнĕ шкул туса ĕçе кĕртнĕ.

Пульницăсене сарнă, ача-пăча сачĕсемпе йаслисен, ача çуратмали çуртсен, хĕрарăмсене валли консультацисен т. ыт. хисепне ÿстернĕ.

1937 çул—йалхуçалăхĕ тĕлĕшпе калама çук паллă çулталăк пулчĕ. Республикă вăтам шутпа гектартан 15,6 центнĕр тырă туса илчĕ. 13 район Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкине хутшăнма права илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Пирĕн колхозниксем халĕ ĕнтĕ чăннипех пуйан та культурăлă пурăнаççĕ. Иртнĕ çулталăкра 500—600 пăт тата 1000 пăт та тырă илнĕ колхозниксем халĕ ĕнтĕ сахал мар.

Халăх тăшманĕсем—троцкиссем, бухаринĕцсем, буржуалă националиссем сăтăрламан пулсан—иртнĕ 1937 çулта пирĕн республикăн çитĕнĕвĕсем татах та пысăкрах пулнă пулĕччĕç.

Халăх тăшманĕсем хуçалăхпа культурă строительствин пур отраслисене те хĕсĕнсе кĕнĕ те унта хăйсен контрреволюцилĕ усал ĕçĕсене тунă. Вĕсем савăтсен программине тултарассине чарса пынă, йалхуçалăхĕнче сăтăрланă, республикăн финанс хуçалăхне арпаштарнă, халăх государствă умĕнчи хăйĕн обйазательствисене тултарас ĕçе вĕсем пăсса, йĕркерен кăларса пынă.

Рабочи клас, колхоз хресченĕсем тата совет интеллигенцийĕ активлă пулăшнипе, пирĕн парти организацийĕ тăшмансене тупса палăртса çĕмĕрсе тăкрĕ. Вĕсене хамăрăн государствă тата хуçалăх аппаратĕнчен хăваласа кăларчĕ, йертсе пырас ĕçсене çĕнĕ çынсене, партийĕ тата халăха пĕтĕм чĕререн паранннă çынсене, сăтăрлăх сийенĕсене пĕтерме, малашне хамăр республикăн хуçалăхпа культурине хăвăртрах ÿстерме пултаракан çынсене лартрĕ.

Халĕ, епĕр халăх хуçалăхĕн 1938 çулти планĕ çинчен калаçнă чухне, иртнĕ çулта пирĕн чăваш республикĕнче плана тултарас ĕçре пысăк прорывсем тата ăнăççăрлăхсем пулнине пит тĕплĕн шута илес пулать. Епĕр, руководительсем, çав ĕçрен хамăра валли кирлĕ вывăдсене тумасан, пит пысăк йанăш пулнă пулĕччĕ.

Канаш — Шупашкар чукунçул строительствинех илĕр. Парти Тĕп Комитечĕ тата ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх ку чукунçула 1937 çулхи нойабĕрĕн вĕçĕ тĕлне туса пĕтерсе, ĕçе йамала пулнă. Анчах çав вăхăт тĕлне çĕрне те купаласа çитермен пулнă; рельсăсене 5 километра йахăн çеç хунă пулнă; кĕперсем натне пымалисене те туман.

Чукунçула мĕншĕн вăхăтра тăваймăн-ха, сăлтавĕ мĕнре?

Пĕрремĕш сăлтавĕ çакă: республикă руководителĕсем пулнисем çакăн пек пысăк ĕçе „субботниксемпех“, „урра“ кăшкăрнипех, йалан ĕçлекен рабочисен кадрсене пухмасăрах туса хурасшăн пулнă. Практикă кунашкал майпа пысăк ĕçе тума май çуккине кăтартса пачĕ.

Иккĕмĕш сăлтавĕ çакă: строительсем, вăл хисепре строительствă начальникĕ Вавилкин йулташ хăй те, ĕç хăй тĕллĕнех пулса тăрĕ, тенĕ, ĕçе организацилемесĕрех, „субботниксем“ тунипех çул пулать, епĕр пĕрремĕш пăравус çине ларатпăр та Канашран Шупашкара рапăртпа килетпĕр, тесе шухăшланă.

Строительсем чи кирлĕ условисене те шута хуман, ĕçленĕ çĕрте йертсе пыракансем пулмала туман, рабочисене ĕçлеме кăшт та пулин те вĕрентсе пыман, рабочисене валли апат-çимĕç, шыв, пурăнмали çурт-йĕр пулмала тăвас, ĕçукçине вăхăтра парас, культурă йенĕпе ĕçлес ыйтусем çине çавăрăнса та пăхман.

Виççĕмĕш сăлтав çакă: строительствă руководителĕсем чи малтан ĕçĕн тĕп сыпăкĕсенчен тытăнмала тăваймăн: ĕççен фронтне ытлашши вăрăмлатса йанă, вăйсене иккĕмĕш вырăнти участкăсене сапаларнă, çав вăхăтрах ответлă участкăсенче —трупасемпе кĕперсем, пысăк дамбăсем тумали тата çĕр чавмали çĕрте ĕçлемен.

Тăваттăмĕш сăлтав çакă: республикă руководителĕсем пулнисем строительствă сезонĕ чи хĕрÿлĕ пынă вăхăтра чукунçула тăвас ĕç çине çавăрăнса та пăхман, строительствăна пулăшу организацилемен,—ăна пулăшу обйазательнă кирлĕ пулнă.

Çавсене пула ĕнтĕ чукунçула тунă çĕрти чи йăвăр ĕçсене кĕркунне тата хĕл вăхăтĕнче тумала килнĕ. Вĕсен çĕрĕпе чукунçул иртекен районсен çав тери пысăк ĕçе хĕл вăхăтĕнче—декабĕр, йанвар, февраль уйăхĕсенче тумала килнĕ, унчухне ĕç условийĕсем ытти вăхăтринчен нумай йăвăртарах пулнă.

Чукунçул тăвас ĕçри хурланчăклă урока пирĕн хисепе илес пулать. Ăна кирек мĕнле ĕçе тунă чухне те асрах тытмала,—ун пек йăнăшсем туни текех ан пултăр.

Тата 1937 çулти иккĕмĕш строительствăна—Çĕрпÿре, Именкассинче, Байгулăвăра колхозсен гидроелектростанцийĕсене тăвас ĕçе илĕр.

Партин Тĕп Комитечĕпе ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн решенийĕ тăрăх çав виçĕ станцине те 1937 çулти ийуль уйăхĕн пуçламĕшĕ тĕлне туса лартмала пулнă. Ĕçре вара çулталăк иртнĕ тĕле гидроелектростанцисем: Çĕрпÿри—59 процент, Именкассинчи—60 процент, Байгулăвăри—51 процент çеç хатĕр пулнă. Çитменне пĕвисене те туса пĕтермен. Çав вăхăтрах ку стройкăсене валли панă укçана пĕтĕмпех расхута йарса пĕтернĕ.

Çавăн сăлтавĕ мĕнре-ха?

Тĕп сăлтавĕ çакă: Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе унăн „Сельэлектро“ кантурĕ çав стройкăсене калама çук хуçасăрла туса пынă, çав станцисен хуçисемпе—колхозсемпе хутшăнусене йĕркелесе йаман, çав хутшăнусем пит паллă мар тата пăтранчăк пулнă.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе партин Тĕп Комитечĕ йышăннă тăрăх çав виçĕ гидроелектростанцисене тума государствă бÿджетĕнчен—кайала тавăрмала мар 750 пин тенкĕ, йалхуçалăх кредичĕ 750 пин тенкĕ памала тунă, ытти 750 пин тенкине колхозсен хăйсен хывмала пулнă.

Ĕçе тĕрĕс организациленĕ пулсан государствă бÿджетĕнчен илнĕ 750 пин тенке пĕтĕмпех станцисене валли турбинăсемпе ытти оборудованийĕ туйанннă çĕре йамала пулнă. Йалхуçалăх кредичĕ йĕркипе илнĕ укçа-тенкĕпе пуринчен ытла строительствă материалĕсем туйанмала, тулти електропроводкăна тумала пулнă, вăл укçан пĕр пайĕ çеç строительствăри ĕççемшĕн, уйрăмăн илсен, инженерла-техникла работниксене тÿлеме каймала пулнă. Строительствăри тĕп ĕçсене колхозсем хăйсем ĕçленипе тумала пулнă, гидроелектростанцисен хуçисем пулса тăракан колхозсен—стройкăра ĕçлекен колхозсен хăйсен шутĕнчен ĕçкунĕсем памала пулнă.

Ĕçре çавна пĕтĕмпех тепĕр майлă туса хунă. Гидроелектростанцисен строительствинче ĕçленĕ колхозниксене „Сельэлектро“ ĕççен хакне пĕтĕмпех государствă бÿджетĕнчен тата йалхуçалăх кредичĕ йĕркипе илнĕ укçапа тÿленĕ. Унсăр пуçне çав колхозниксенех Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ пулнă Йурйĕв хушнипе, ĕçлесе илнĕ кашни тенкĕ пуçне тата 0,2 ĕçкунĕ хушса панă, çавна вара колхозсем хăйсен вăйĕпе çав строительствăна хутшăнни пулать, тесе шутланă. Çапла вара пĕр ĕçе тунăшăн икĕ хут тÿленĕ.

Вара çулталăк пĕтнĕ çĕре çакăн пек пулса тăнă—государствă бюджетĕнчен, тата йалхуçалăх кредичĕ йĕркипе илнĕ укçа-тенке пĕтĕмпех расхута йанă, унсăр пуçне колхозсем 80 пин ытла ĕçкунĕ пĕтернĕ, станцисем çапах та туса пĕтерменнипех йулнă. Халĕ ĕнтĕ çуркунне çав станцисем çĕмĕрĕлсе пĕтес хăрушлăх, вĕсене çурхи шыв йухтарса кайас хăрушлăх пур.

Халĕ ĕнтĕ калама çук пысăк йăвăрлăх пулса тăчĕ, мĕншĕн тесен укçа çук. Епĕр ССР Союзĕн правительствинчен ытса станцисене авари пуласран сыхласа хăварма 50 пин тенкĕ илтĕмĕр. Пирĕн ку строительствăна пăрахмала мар, пăрахма йурамасть те. Пĕвесене çурхи шыв ан йухтарса кайтăр тесе мĕн кирлине пурне те тумала, мĕншĕн тесен вĕсене тума пайтах ĕçленĕ тата укçа-тенкĕ те нумай хывнă. Епĕр çак ыйтăва каллех ССР Союзĕн правительстви умне лартрăмăр, мартăн 26-мĕшĕнче ĕнтĕ ун çинчен Економсоветра калаçрăм, ыйту кирлĕ пек татăласса шанатпăр.

Çаксем çинчен епĕ акă мĕншĕн калатăп,—гидроелектростанцисене тăвас ĕç çавăн пек ăнăççăр пулнине кура пирĕн кирлĕ вывăдсене тăвас пулать, унашкал йăпаласем малашне ан пулччăр.

Малала 1937 çулта çĕнĕрен тумала пулнă ĕççен планне мĕнле тултарнине илер. Пĕрремĕшĕнчен, строительствăсен нумайĕшĕн 1937 çулхи çентабĕр уйăхĕчченех çирĕплетнĕ пройектсемпе çметăсем пулман, Çĕмĕрлери кирпĕч савăчĕн вĕсем çулталăк пĕтнĕ тĕле те пулман. Есĕр пĕлетĕр, çметăсемпе пройектсемсĕр укçа памаççĕ, çавăнпа ĕнтĕ вăл строительствăсене тăвасси пурнăçа кĕмен.

Иккĕмĕшĕнчен, строительствă ĕçĕ хăй тĕллĕнех пуласса шаннă. Сăмахран, Çутĕç Халăх Комиссариачĕ 1937 çулта хăшпĕр шкулсене туни çинчен çак 1938 çулти март уйăхĕнче тин—Халăх Комиссарĕсен Советĕнче районсен бÿджечĕсене пăхса тухнă чухне пĕлчĕ.

Çапла вара çĕнĕрен тумали строительствă планĕ пурнăçа кĕмесĕр йулнă: Стройтрест плана 80 процент çеç тултарнă, Çутĕç Халăх Комиссариачĕ йалсенчи шкулсен строительствин планне 82 процент тултарнă, Сывлăха сыхлав Халăх Коммиссариачĕ плана 76 процент тултарнă. Промышлĕннăç строительстви йенĕпе (вырăнти промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕ, Апат-çимĕç промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕ, промкоопераци) çĕнĕ строительствă планне 44 процент çеç тултарнă. Çав вăхăтрах тата строительствă ĕçĕсем йĕркесĕр хаклаларни те пулнă. Вырăнти промышлĕннăç строительствинче ĕçсене тума ларакан хака 10,1 процент чакарасси вырăнне, вăл хак 21,2 процент таран ÿснĕ. Вăл йанăшсене кăçал та тăвас мар тесе, пирĕн çавсене шута илмеле, унтан уроксем тумала.

Союзлă тĕп савăтсем тăрăх 1937 çулти программăна 97,7 процент тултарнă. Çĕмĕрлери екстракт савăчĕ „Большевик“, Çĕмĕрле комбиначĕ, спирт савăчĕсем тата союзлă республикăлă савăтсенчен Шупашкарти тир-сăран савăчĕ 1937 çул программине иртерсе тултарнă.

Çак савăтсемпе, производствă программине ăнăçлă тултарнă савăтсемпе йунашар, плана тултарман предприйатисем те пур. Вырăнти промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕ йенĕпе, фосфорит савăчĕпе полиграфтрестсăр пуçне, пĕр предприйати те плана тултарман, Шупашкарти кирпĕч савăчĕ плана 66,4 процент çеç тултарнă, Иванăвăри кирпĕч савăчĕ—83,3 процент, Вăрмарти спорт инвентарĕ тăвакан хапрăк 81,8 процент тултарнă. Апат-çимĕç промышлĕннăç Халăх Комиссарачĕ тăрăх та çавах, Йетĕрнери çу савăчĕсĕр пуçне урăх пĕр предприйати те плана тултарман, Крахмал савăчĕсем плана 96,2 процент тултарнă, макарон хапрăкĕ—73,8 процент, армансем—84,4 процент тултарнă. Иртнĕ çулталăкра Канашри вакунсем йусакан савăт пит йăпăх ĕçленĕ, вăл плана 71,8 процент çеç тултарнă. Улатăрти пăравуссем йусакан савăт та программăна пурнăçа кĕртеймен, вăл ăна 94 процент çеç тултарнă.

Промышлĕннăçпа строительствă йенĕпе ĕç çакăн пек тăнă. Ку йенпе те çеç мар, ытти нумай ĕçсем тĕлĕшпе те 1937 çулта пирĕн республикăра пысăк прорывсем пулнă. Финанс ĕçĕнче пит пысăк прорыв пулса тăнă.

Парти обкомĕн пленумĕ декабĕр уйăхĕнче ку ыйтăва йатарласах сÿтсе-йаврĕ. Республикă тăрăх государствă бÿджетне тупăш пайĕ йенĕпе, резервлă фондсемпе усă курнине шутламасан, йышăннинчен 10 мĕлйун тенке йахăнах кайа тултарнă. Бюджетăн расхут пайне епĕр тултарнă, анчах ăна резервлă фондсемпе усă курса тултарнă, урăхла каласан, расхута йама йурамаи укçа-тенке расхутласа пурăннă. Союз правительствин пире резервлă фондсенчен парса пулăшмала килчĕ.

1937 çулта йалхуçалăх продукцисене хатĕрлес тĕлĕшпе те çитĕлĕкле ĕçлемен. 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшне МТС натурплатине тÿлессине—87,5 процент, колхозсем кивçен илнине тавăрса парассине—82,6 процент, кĕреçе тырри пухассине—36,7 процент, государствăна çĕрулми тăратассине—93,3 процент, аш-какай тăратассине—90 процент, сĕт парас плана—98 процент, çăм тăратас плана—91 процент çеç тултарнă.

Çапла вара, 1937 çул вĕçне епĕр чылай ĕçсем йенĕпе йăпăх ĕçленине кăтартакан цифăрсемпе тухрăмăр.

Çул-йĕр строительствинче те,—ку йенпе республикă чаçа тухнă пулин те,—чылай пысăк прорыв пулнă, плана тултараймăн.

Çаксенчен пуринчен те пирĕн хамăра валли большевикла вывăдсем тăвас пулать,—1938 çул—пĕтĕм ĕçсене татăклăн çĕклентерсе йамали çулталăк пулса тăтăр, прорывсем малашне ан пулччăр.

1938 çулти планăн тĕп ыйтăвĕсем

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ сирĕн ума—пăхса тухма тата çирĕплетме тăратнă халăх хуçалăхĕн 1938 çулти планĕ хамăр республикăн халăх хуçалăхĕн пур отраслисене те тата культурă строительствине анлăн сарса йама май парать. Ăна, халăх хуçалăхĕн 1938 çулти планне, ĕççыннисен пурнăçне малала лайăхлатса пымала, халăх массисен ÿссе пыракан кирлĕ ыйтăвĕсене лайăхрах çураçтармала тунă.

1938 çулти планра епĕр хамăр республикăн халăх хуçалăх ÿсĕмĕнчи пысăк та паха проблемăсене пурнăçа кĕртме палăртнă.

Пĕрремĕшĕ, епĕр республикĕн столицинче—Шупашкарта промышлĕннăçлă пысăк узĕл тăвас тетпĕр. Çакă вăл политикăпа хуçалăх йенĕпе пысăк вырăнта тăнине есĕр пĕлетĕр. Столицăра хальхи вăхăтра мĕн чухлĕ те пулин пысăк предприйатисем çук, кунта рабочи класăн йышĕ сахал. Буржуалă националиссем, йертсе пырас çĕрте ларнăскерсем, столицăра промышлĕннăçпа рабочи клас пуласинчен вутран хăранă пекех хăранă, çавăнпа вĕсем кунта савăтсем лартман.

1938 çулта столицă промышлĕннăç ÿсĕмĕн çулĕпе малала кайас тĕлĕшпе пысăк ĕç пуçланать. Союзшăн ĕçлемели савăтсем—2 савăт тăватпăр, вĕсене тума 24,5 мĕлйун тенкĕ укçа хывмала пулать. Унсăр пуçне Шупашкарта тата ытти хăшпĕр савăтсен строительстви валли те хатĕрленÿ ĕçĕсене тумала. Сăмахран, пысăк кирпĕч савăчĕ лартма хатĕрленсе нумай ĕçсем тумала,—савăчĕ вăл çулталăкра 40 мĕлйун ытла кирпĕч туса кăлараканскер пулать. Çав савăт вăл—Шупашкарти тата Иванăвăри савăтсене пĕрле илсен, вĕсенчен тăвата хут пысăкрах пулать. Авторемонтнăй пысăк савăт лартма пройектсем хатĕрлемеле пулать, савăтне ăна 1939 çулта лартмала, çакăр савăтне тата ытти предприйатисене те лартма хатĕрленес ĕçсене тăватпăр.

Иккĕмĕшĕ, кăçалхи çул республикĕн халăх хуçалăхне валли енерги парас проблемăна татса парас ĕç пуçланать. 1938 çулта пирĕн Канашра—вакунсем йусакан савăтра пысăк, 5,5 пин киловаттлăх теплоелектроцентраль туса ĕçе йамала. Кăçалхи çулах пирĕн Буинскри сланец рудникĕнче 750 киловаттлăх теплоелектроцентраль туса ĕçе йамала.

1938 çулта Шупашкарта промышлĕннăçлă пысăк теплоелектроцентраль строительствине хатĕрленмели ĕçсене тăватпăр; малтанласа шутласа хунă тăрăх, ку теплоелектроцентраль 10—12 пин киловаттлăх пулмала. Çак каланисемсĕр пуçне кăçал тата хальхи коммуналлă електростанцисем те нумай саралаççĕ. Шупашкарти тата Улатăрти електростанцисене уйрăмах чылай пысăклатмала пулать. Виçĕ гидроелектростанцисене — Çĕрпÿ, Трак тата Куславкка районĕсенче—ĕçе йамала.

Виççĕмĕшĕ, кăçалтан ĕнтĕ республикăра хутмалисен çĕнĕ базине тăвас ĕç пуçланать. Хутмали вăл халăх хуçалăхĕн ÿсĕмĕнче пит пысăк ыйту пулса тăнине есĕр пĕлетĕр. Кăçалхи çул пирĕн Атăл леш йенчи торфа промышлĕннăçа валли кăларма хатĕрленсе пысăк ĕçсем тумала. Буинскра сланец кăларакан пысăк рудник туса пĕтерсе ĕçе йаратпăр, 1938 çулăн вĕçĕ тĕлне вакунсем йусакан савăта тата пăравуссем йусакан савăта валли хутма 5 пин тоннă сланец парас тетпĕр.

Тăваттăмĕшĕ, 1938 çулта епĕр Канаш—Шупашкар чукунçул линине туса пĕтерсе, çулталăкан варринчен пуçласа пуйăссене йĕркелĕ çÿретме пуçламала тăвас тетпĕр, çавăнпа вара республик столицин транспăрт ыйтăвĕ пурнăçа кĕрет, столицăра промышлĕннăç строительствине сарса йама условисем пулаççĕ.

Халăх хуçалăхĕн çав проблемисене татса пама палăртнипе пĕрлех, 1938 çулти планра республикăри кивĕ промышлĕннăçлă узĕлсене—Çĕмĕрлене, Канаша, Улатăра т. ыт. те малала ÿстерме палăртнă. Çакна каласан та çителĕклĕ пулать,—Канашри вакунсем йусакан савăта кăçалхи çул 4 мĕлйун тенкĕ хываççĕ, Çĕмĕрлери предприйатисене 2 мĕлйун та 200 пин тенкĕ, Улатăрта гармонь хапрăкĕн строительствинех 2 мĕлйун та 285 пин тенкĕ тата пăравуссем йусакан савăт йенĕпе çур мĕлйун тенкĕ хыватпăр.

Иртнĕ çулсенче пуçланă строительствăна малала тума тата ĕçлекен предприйатисене çĕнетсе тума палăртнă чухне, епĕр пуринчен малтан—сăтăрлăх сийенĕсене пĕтерессине асра тытрăмăр. Сăмахран, Канашри вакунсем йусакан савăтра пĕвен сăтăрла тунă йăвăç затворне—тимĕр затворпа улăштармала. Кăçалччен ку савăтра шыв пулман, сăтăрçăсем водопровод илсе пырассине йурийех чарса тăнă, шыв производствăна валли те çитмен. Çавăнпа савăт йалан ах пушар хăрушлăхĕнче пулнă. Урапа цехĕнчен çавакан, шăратса сыпăçтаракан ваннăсене тата вучахсене урăх çĕре куçараççĕ, вĕсенчен тухакан тĕтĕм-сĕрĕм рабочисене анратнă тата оборудованийе те пăснă пулнă.

Фосфорит савăтĕнче çилос башнине пĕтĕмпе пекех çĕнĕрен тăваççĕ, Çĕмĕрле комбинатĕнче типĕтекен хуçалăха çĕнетеççĕ тата ытти ĕçсене те чылай тăваççĕ. Çавăн пек ĕçсене халăх хуçалăхĕпе культурă строительствин пур отраслисенче те туса иртерме палăртнă.

Стахановла йухăм пирĕн савăтсен производствинче „хĕсĕк вырăнсем“ чылай пуррине палăртрĕ, вĕсем оборудованипе туллин усă курма чăрмантараççĕ, стахановла йухăма малала ÿстерсе пыма кансĕрлеççĕ. Сăмахран, Шупашкарти макарон хапрăкĕнче прессен вăйне илсен, çменăра 10 тоннă макарон таврашĕсем туса кăларма пулать, унăн типĕтекеннине—тонна çурăйе икĕ тоннă типĕтмелĕх çеç тунă; Шупашкарти тата Иванăвăри кирпĕч савăчĕсенче прессен вăйне илсен 16—17 мĕлйун таран кирпĕч туса кăларма пулать, вĕсен типĕтекен хуçалăхне 12—13 мĕлйун çеç кирпĕч типĕтмелĕх тунă; Çĕмĕрле комбинатĕнче простой механизаци те çук, йăвăç çуракан цех йалан ах „пробкă“ пулнă.

1938 çулти планра çав „хĕсĕк вырăнсене“ пĕтерме, оборудованипе лайăхрах усă курмала тума, рабочисен ĕçтухăçлăхне хăпартмала тума палăртса хунă.

(Малали 2-мĕш страницăра).

Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн халăх хуçалăхĕн 1938 çулти планĕ çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Л. С. СПАСĂВ йулташ Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕн X-мĕш Сессийĕнче 1938 çулти апрелĕн 3-мĕшĕнче тунă доклад

(Малалли)

Планра туса кăларакан продукцин ассортиментне тата пахалăхне чылайах лайăхлатма палăртнă. Пĕтĕмĕшпе каласан, 1938 çулти план хисеп йенĕпе те, пахалăх йенĕпе те пысăк ÿсĕмсем тума палăртса хурать.

Республикĕн халăх хуçалăхĕ ÿсне май, ĕçтухăçлăхĕ хăпарнă май, рабочисен ĕçукçийĕ малала ÿсет, пурнăç татах лайăхланать.

Малала ĕнтĕ плана халăх хуçалăхĕн отрăçлисем тăрăх пăхса тухăпăр. Халăх хуçалăхĕн уйрăм отрăçлисене пăхса тухнă чухне, ман шутпа, чи малтан промышленнăç çинчен пăхса тухас пулать.

Промышленнăç 1938 çулта

Промышленнăç йенĕпе капитальнăй ĕçсен пысăкĕшĕ кăçал пĕлтĕрхинчен 3 хут ытла нумайрах. Иртнĕ çулта 11 мĕлйун та 970 пин тенкĕ хывнă пулнă, кăçал промышленнăçри капитальнăй ĕçсен пысăкĕшĕ 41,1 мĕлйун тенкĕлĕх пулать. Чи пăлăрахххи тата çакăнта пулать: çав хисепрен 30 мĕлйун тенки кăçал çĕнĕ савăтсем лартас çĕре кайать.

Государствă промышленнăçĕн пĕтĕм продукци 63 мĕлйун та 751 пин тенкĕлĕх пулать, иртнĕ 1937 çулта 56.330 пин тенкĕлĕх кăна пулнă. Çапла вара, кăçал пирĕн саватсем пĕлтĕрхинчен 7 мĕлйун та 724 пин тенкĕлĕх ытларах продукци туса кăлармала. Кăçал туса кăларнă продукци пĕлтĕр туса кăларнипе танлаштарсан 113 процент пулмала.

Промышленнăçăн уйрăм предприйатийĕсем тата отрăçлисем тăрăх çакăн пек ĕçсем туса иртерме палăртнă:

Çĕмĕрле комбиначĕ тăрăх 1465 пин тенкĕлĕх капитал хывма палăртнă, вăл шутран шыв тăратас ĕçе организацилеме тата лайăхлатма 180 пин, савăт ăшĕнчи транспăрт вальли 50 пин, çуракантатакан цеха урăхлатса çĕнетме 110,0 пин тенкĕ.

Культурăпа йăла строительствине 480 пин тенкĕ расхутланать. Кăçал клуб, мунча, кĕпе çумали туса лартмала. Комбинатăн пĕлтĕрхи 11,5 мĕлйун тенкĕлĕх выранне кăçал 13,5 мĕлйун тенкĕлĕх продукци туса кăлармала—иртнĕ çулхинчен 16,6 процент нумайрах. Пĕр рабочи туса кăларасси 10,6 процент ÿсмеле.

Ĕçукçи фончĕ 5839 пин тенкĕрен 6920,5 пин тенке çити хăпарать.

Комбинатăн кăçал: 166,5 пин касса тунă пукансем, 200 пин венски пукансем, 25 пин венски креслăсем, 200 пин венски çурма креслăсем, 200 пин тваткăл метр паркет тата ытти те туса памала.

„Большевик" савăт тăрăх капитальнăй ĕçсен пысăкĕшĕ 756,0 пин тенкĕлĕх пулать. Кăçал „Скумпия" йатлă çĕнĕ цех туса лартмала. Вăл питĕ те кирлĕ выран йышăнса тăрать. Çавăн пекех тата оборудованисене тĕпренех йусассине туса иртермеле. Пĕр пурăнмали çуртăн строительствине вĕçне çитермеле. Савăт продукцийĕ 4063 пин тенкĕлĕх пулать.

Ĕçукçи фончĕ 1667 пинрен 1846,6 пин тенке çити ÿсет. Пĕр рабочи туса кăларасси 0,9 процент ÿсет.

Канашри вакунсем йусакан савăт тăрăх капитал хывнисен пысăкĕшĕ 4709,5 пин тенкĕ пулать, вăл шутран теплоелектроцентраль строительствине 2229,0 пин тенкĕ, шыв тăратас ĕçе 840 пин тенкĕ, çĕнĕ пурăнмали çуртсем тума 1260 пин тенкĕ хумала тата çур мĕлйун тенкĕ ытларах кивĕ пурăнмали çуртсене йĕркене кĕртес çĕре расхутланать. Савăтăн кăçалхи программи чылайах пысăк, унăн 835 çивиттилĕ икĕ тĕнеллĕ вакунсем тĕпренех йусамала, 40 тăвата тĕнеллĕ вакун, 100 платформă йусамала. 1961 икĕ тĕнеллĕ вакунсене, 270 тăвата тĕнеллисене тата 200 платформă вăтамăн йусамала. Кунсăр пуçне, савăтăн кăçал 10 пин рессорсем йусама, 1500 штук çĕçе рессорсем туса хатĕрлеме задани пур, т. ыт. те.

Пĕр рабочи туса кăларасси 21,2 процент ÿсмеле.

Савăта пана задани тăрăх пĕтĕм продукци пĕлтĕрхинчен 58,3 процент ытларах пулмала.

Улатăрти паравуссем йусакан савăт тăрăх капитал хывассин пысăкĕшĕ 500 пин тенкĕ пулать. Кăçалхи çул савăт чылайах çĕнĕ оборудованисем илет. Ку савăтра хĕрĕх çул хушши оборудованине çĕнетмен, оборудовани хавшанса пĕтнĕ, станоксем йĕркерен тухнă, çавăнпа та йусав пахалăхĕ начар пулса пырать. Епĕр çак савăта пухса йĕркелекен цеха аслăлатма тата кран хуçалăхĕ туса хума 904 пин тенкĕ пама хыттăн ыйтрăмăр. Унта кивĕ меслетсемпе усă курăççĕ, кран хуçалăхĕ çук. Епĕр ыйтнипе Улатăрти савăта çитес кунсенчех çак савăта малала аталантарас ыйтусене пăхса тухма йатарласа бригадă килмеле.

Савăтăн задани тăрăх пĕлтĕрхи 163 паравус выранне, кăçал 240 паравус йусаса кăлармала. Ку савăтăн чылайах пысăк пуласлăх пур, вăл чи çывăх вăхăтрах самайах аслăланмала, епĕр вăл ыйтăва пур майсемпе те васкатăпăр.

Савăтăн пĕтĕм продукцийĕ 5890 пин тенкĕлĕх пулмала.

Буинскри сланĕц рудникĕ тăрăх капитальнăй ĕçсен пысăкĕшĕ 1938 çулта 2210 пин тенкĕлĕх пулать, вĕсенчен шахтă строительствине 700 пин тенкĕ кайать, теплоелектроцентраль строительствине 710,0 пин тенкĕ тата пурăнмали çуртйĕрпе коммуналлă строительствăна 800 пин тенкĕ каймала. Епĕр ку питех те кирлĕ тесе шутлатпăр. Правительствăна Тĕпком пире пулăшса, рудника пĕтĕмĕшпех туса пĕтермеукçа-тенкĕ уйăрса пачĕç. Кăçал сланĕç рудникĕсем експлоатацине кĕмеле тата вĕсен паравуссем йусакан тата вакунсем йусакан савăтсем вальли 5 пин тонна сланĕц памала.

Долгопольанăри савăт тăрăх капитал хывассин пысăкĕшĕ 312 пин тенкĕ пулать. Пĕтĕм продукци 840 пин тенкĕлĕх пулмала, ÿсĕм 53 процент. Савăтăн 2500 тоннă канифоль супăнĕ тата 262 тоннă скипидар туса памала.

Куславккари комбинат тăрăх капитал хывассин пысăкĕшĕ 1938 çулта 155,0 пин тенкĕ пулать. Пĕтĕм продукци 4 мĕлйун тенкĕлĕх пулмала. Палăртмала, çак комбинат чылай нумайрах задани илме пултарĕччĕ, епĕр вăл татах та хушса задани илессине шанатпăр, анчах халлĕхе чĕрĕ тавар 4 мĕлйун тенкĕлĕх вальли кăна пур-ха.

Спиртпа ерех промышленнăçĕ тăрăх. Вĕсем пирĕн 3 савăт: Шупашкарта, Йетĕрнере тата Сĕнтĕрвăрринче. Кăçал 289 пин тенкĕлĕх капитал хывмала пулать. Спирт савăчĕсен çак çулта 6176,5 пин тенкĕлĕх продукци туса кăлармала.

1938 çулта выранти органсене пăхăнса тăракан промышленнăç чылайах ÿсет.

Выранти промышленнăç халăх комиссариачĕ тăрăх 4116,0 пин тенкĕ хыванать, иртнĕ çулта 1172,2 пин тенкĕ пулнă. 3,5 хут ытларах ÿсĕм пулать. Улатăрти гармонь хапрăкне туса çитермеле, ăна туса çитерме кăçал 2285 пин тенкĕ хывмала. Вăрмарти хапрăкăн пăс вайĕн хуçалăхне урăхлатса çĕнетеççĕ, фосфорит савăтне чылай лайăхлатусем кĕртмеле, кирпĕч савăчĕсен хальхи „хĕсĕк" выранĕсене пĕтермеле. Кăçалхи çул çĕнĕ кирпĕч савăчĕ тума тытăнмала.

Выранти промышленнăç халăх комиссариачĕн промышленнăçĕ тăрăх пĕтĕм продукци пĕлтĕрхи 4477,6 пин тенкĕлĕх выранне, кăçал 6115,5 пин тенкĕлĕх пулмала. Ÿсĕм 36,6 процент. Выранти промышленнăç халăх комиссариачĕн савăчĕсенче çак çулта 1389 çын ĕçлемеле, иртнĕ çулта 903 çын пулнă. Анчах çапла пулин те каламала: пирĕн выранти промышленнăç пачах та çителĕксĕр ÿссе пынă. Выранти промышленнăçа ÿстермеле, ăна ÿстерессi çине пысăккăн çаварăнса пăхмала. Выранти промышленнăç халăх комиссариачĕн савăчĕсем кăçал 15,5 мĕлйун штук кирпĕч, 200 байансем, 8000 венски гармоньсем, 34,0 пин тоннă фосфăр çăнăхĕ, 18,0 пин пукансем, 1,5 пин дивансем, 5 пин мăшăр йĕлтĕрсем, т. ыт. те памала.

Апат-çимĕç промышленнăç халăх комиссариачĕн промышленнăçĕ тăрăх капитал хывассин пысăкĕшĕ 496 пин тенкĕ пулать, иртнĕ çулта 195 пин тенкĕ пулнă, ÿсĕм 2,5 хут. Шупашкарта талăкра 60 тоннă пысăк пахалăхлă çăнăх авăртса кăлармала вайлă арман строительстви пуçланать. Çăкăр савăчĕ лартма хатĕрленÿлĕ ĕçсене туса иртермеле. Макарон хапрăкĕнчи типĕтекен хуçалăх урăхланса çĕнелмеле, вăл пысăк пахалăхлă продукци нумайрах туса кăларма май памала.

Апат-çимĕç промышленнăç халăх комиссариачĕн промышленнăçĕн пĕтĕм продукцийĕ кăçалхи çул 4395,2 пин тенкĕлĕх пулать, иртнĕ çулта 3741,6 пин тенкĕлĕх пулнă. Ÿсĕм 17,5 процент. Пĕр рабочи туса кăларасси иртнĕ çулти 960 тенкĕ выранне кăçал 13420 тенкĕ пулмала.

Апат-çимĕç халăх комиссариачĕн савăчĕсем çак çулта 305 тоннă вĕрмишел, 246 тоннă макарон, 400 тоннă сагă, 3700 тоннă типĕ крахмал, 1300 тоннă çаптарнă çу, 1200 тоннă натуральнăй олифа, 2640 центнĕр чĕрĕ пулă, тата 45 тоннă пиравăр çумали супăнь параççĕ. Армансем 13000 тоннă тĕштырăсене авăртаççĕ.

Райĕçтăвкомсен промышленнăçĕ тăрăх капитал хурасси лимита кĕмен тăкаксемпе пĕрле 373 пин тенкĕ пулать. Çĕмĕрлери, Тракри, Канашри кирпĕч савăчĕсене, Шăмăршăри атă çĕлекен мăстерскойне, Хĕрлĕ Чутайри пахча-çимĕçсене ĕçлесе хатĕрлекен мăстерскойне туса çитермеле тата тĕрлĕ районсенче квас туса кăларасси организациленет. Анчах палăртмала, райĕçтăвкомсем хăйсен савăчĕсемпе кирдĕ пек ĕçлемеççĕ. Шăмăршăпа Канаш районĕсем кăна çапах та лайăхрах ĕçлеççĕ. Канашри руководительсем—райком секретарĕ те, райĕçтăвком председателĕ те — йулашки вăхăтра премĕк мăстерскойĕнче йĕрке тăвас тĕлĕшпе чылайах хĕрÿлĕн тытăнчĕç тата пысăк ÿсĕмсемех турĕç. Продукци туса кăларассине нумай ÿстерчĕç тата пахалăхне лайăхлатрĕç. Кăçалхи çулăн бÿджетне пăхса тухнă чухне, Шăмăршă райĕçтăвкомĕн председателĕсĕр пуçне, пĕр райĕçтăвком председателĕ те райĕçтăвкомсен предприйатийĕсене аталантарма укçа ыйтмарĕç. Çав пăхăтрах района пăхăнса тăракан промышленнăçа аталантарма пирĕн чĕрĕ тавар илсе пĕтерейми нумай. Епĕ астăватăп, Горький облаçĕнче, бÿджета пăхса тухнă чухне, райĕçтăвкомсен председателĕсем хăйсен районĕнчи савăтсем вальли укçа илессишĕн питĕ çиреппĕн тăратчĕç. Пирĕн урăхла, чĕнмесĕр тăраççĕ. Савăтсем тытакан районсенче те ĕнтĕ вăл савăтсемпе интересленмеççĕ, ĕçлемеççĕ. Пирĕн райĕçтăвкомсен промышленнăçне вайлăн сарса пымала, вăл питĕ те кирлĕ ĕç, вăл питĕ те усăлă та паха ĕç.

Кооперативлă промышленнăç тăрăх капитал хывасси, лимитсăр расхутламалисене кĕртсе, 1620,7 пин тенкĕлĕх пулать. Пĕтĕм продукци 59829,7 пин тенкĕлĕх пулмала, иртнĕ çулта 53528,6 пин тенкĕлĕх пулнă. Ÿсĕм 12 процента йахăнах.

Кооперативлă промышленнăçăн çак çулта: 8 мĕлйун штук хĕртнĕ кирпĕч, тăм посудăсем 392 пин штук, атă-пушмак 34.200 мăшăр, çăматăсем 30 пин мăшăр, çĕлĕктутăрсем 150 пин штук, чулхасемпе носкисем 198 пин мăшăр, апат-çимĕç тавраш 7 пин тонна, сĕтел-пукансем 1,4 мĕлйун тенкĕлĕх, чăпта 6 мĕлйун штук, гитарăсем 1300 штук, балалайкăсем 1100 штук, т. ыт. те памала.

Кооперативлă промышленнăçра кăçал 10961 çын ĕçлемеле пулать.

Вăрман хуçалăх тата вăрманпа усă курас йенĕпе пысăк ĕçсем тума палăртнă.

Сăмахран, вăрман савăчĕсем тăрăх халĕ ĕçлекен савăтсене лайăхлатма 240 пин тенкĕ каймала. Алтăш савăтĕнче пăс вайĕн хуçалăхне тата електрооборудованисене тĕпренех йусассине туса иртермеле. Кирери вăрман савăтĕнче çĕнĕ локомобил лартмала тата хальхи пăс вайĕн хуçалăхне йĕркене кĕртсе çитермеле. Мильутинри вăрман савăтĕнче те çавăн пекех çĕнĕ локомобил пулмала. Унсăр пуçне корпуссемпе оборудованисене йусамала. Улатăрти вăрман савăчĕсенче корпуссене йусамала тата хăшпĕр хатĕрсене илсе çитермеле. Оборудованисене лайăхлатас тĕлĕшпе хăшпĕр ĕçсем тата ытти савăтсенче те пулса иртмеле.

Чăвашвăрманпромăн хăма çуракан савăчĕсен 153 пин кубла метр хăма çурса кăлармала, 9 пин кубла метр штукатуркă вальли дранкăсем, 1200 штук сĕтел-пукан таврашĕсем, т. ыт. те тумала. Чăвашвăрманпромăн хăма çуракан савăчĕсен пĕтĕм продукцийĕ 5230 пин тенкĕлĕх пулать.

Кăçалхи çулта Чăвашвăрманпромăн йăвăç хатĕрлес тата турттарса кăларас программи пысăк. 490,0 пин кубла метр йапаласем тумали йăвăç тата 434 пин кубла метр вутă хатĕрлемеле, 520 пин кубла метр йапаласем тумали йăвăç тата 450 пин кубла метр вутă турттарса тухмала. Чăвашвăрманпром çак плана тултарас ĕçре тунă „ÿсĕмсем" çинчен сире каласа пама кирлех мар. Программăна чылай вăрманпромхозсем пурнăçа кĕртеймерĕç, перремĕш квартăл программине ĕçе кĕртмен. Ку ĕнтĕ пирĕн ĕçри пысăк çитменлĕх. Епĕ ку ĕç çинчен чарăнса тăмастăп, халăх хуçалăх планĕ пирки пренире тухса каланисенче кун çинчен нумай чарăнса тăрĕç, тесе шанатăп. Мĕншĕн тесен, есĕр хăвăр пурте вăрман хатĕрлев планне пурнăçа кĕртни мĕнле выран йышăнса тăнине тата çак ĕç çине пирĕн партипе правительствă мĕнле çаврăнса пăхнине ăнланатăр. Пĕр çакна кăна калатăп: вăрман хатĕрлес плана пурнăçа кĕртни 1938 çулти строительствă планне пурнăçа кĕртме кирлĕ чи пысăк условисенчен пĕри пулса тăрать. Вăрмансăр строительствă ĕçне тума çук тата вăрман пулмасан, пайан мĕн çинчен каланисене те пурнăçа кĕртеймĕпĕр. Çурхи шыв шур иртсе кайсанах, пирĕн вăрмана массăлăн ĕçлеме тухассине организацилемеле тата кирек мĕнле пулсан та вăрман ĕçĕсенчи прорыва пĕтерсе хумала.

1938 çулти план тăрăх 1 мĕлйун тенке йахăн вăрман хатĕрлес тата турттарса тухас ĕçе лайăхлатас, уйрăманах вăрманти пурăнмали çуртйĕрсене тата коммуналлă условисене лайăхлатас, транспăрт хуçалăхне лайăхлатас çĕре хума палăртнă. Çак ĕçсем пурте вăрмай хуçалăхĕнче пысăк выран йышăнса тăраççĕ.

Пирĕн лесниксене калас пулать: вĕсем питĕ те начар ĕçлеççĕ. Вăрманта ĕçлессине лайăхлатма вăрманта йаланах ĕçлекен рабочисен кадрĕсене тумала, йалан ĕçлекен рабочисен кадрĕсене туса хатĕрлесси халиччене начар пулса пырать-ха. Вĕсен хăйсен лайăх транспăрт пулмала. Вăл транспăрта тăвасси те çавăн пекех начар пырать. Халĕ пур транспăрта тата кадрсене тулли ĕç парса усă курмаççĕ. Квалификацилĕ кадрпа нумайрах иккĕмĕш выран йышăнакан ĕçсенче усă кураççĕ. Çавăн пекех механисăмсемпе пуринпе те начар усă кураççĕ. Механисăмсем вĕсен нумай, анчах вĕсемпе пуринпе те 45—50 процент таран кăна усă кураççĕ. Вăрманти ĕçе начар организациленĕ. Çаксем пурте программăна пурнăça кĕртессине вайлăн чăрмантараççĕ.

Тата вăрман организацисем çултен пуçласа айала çитиччене ĕç укçи йенĕпе пĕртте хыпаланманни çинчен каламала. Чăваш вăрманпром тата вăрманпромхозсем иртнĕ çулта ĕçленĕшĕн колхозсене халиччен те тÿлесе татма пултарайман-и вара? Пысăк парăм пур, вăл хăшпĕр вăрманпромхозсенче 200—250 пин тенке те çитет. Çакă вăрман ĕçне ĕç вайĕ пухса хатĕрленĕ чухне питех те пысăккăн туйăнтарать. Колхозник çапла калать:

—„Епĕ вăрмана кайăттăмччĕ, анчах ĕненместĕп: есĕр мана тÿлĕр-и, миçе хут есĕр мана тÿлемерĕр?"

Йулашки уйăхра Вăрман халăх комиссариачĕн çĕнĕ руководстви хăшне-пĕрне тÿрлетрĕ ĕнтĕ.

Епĕр çине тăрса ыйтнине пула банк укçа парса тăрас ыйтусене тата ытти ыйтусене те татса хунă. Ку атмосферăна кăштах çемçетрĕ анчах кунпах çитмест-ха, вăрманта чылай ыйтусене татса паман-ха.

Пирĕн лесниксем вăрманти ĕç лайăххăн кайтăр тесе, вăрманта хальхи пек пăтранас мар, тесе шутлаççĕ пулсан, вăрманта культурăпа йăла тĕлĕшĕнчен лайăх условисем тумала, рабочисен йалан ĕçлакен кадрĕсене тата хăйсен транспăртне туса хумала. Епĕр çак тĕлĕшпе хытăрах тыткалăпăр тата çав задачăсене пурнăça кĕртессишĕн тăрăшăпăр.

Вăрман организацисен тата тепĕр пысăк чирĕ вăл—вăрман работникĕсем хушшинче дисциплинăна çĕклессишĕн большевикла кĕрешни çукки. Унта алла ăшăтса тăракан çынсем нумай, жуликла тата иккĕленмеле çынсем нумай, вĕсем государствă пурлăхне вăрлаççĕ тата салатаççĕ. Вăрман организацисем вĕсене хирĕç татăклăн кĕрешсе пымаççĕ, Халĕ епĕр Халăх Комиссарĕсен Совечĕн йатарлă комиççине турăмăр, ăна вăрман ĕçĕсемпе ĕçлеме, çÿлте асăннă сурана пĕтерсе хурас майпа вăрманта халĕ пур йĕркесĕрлĕхсене пĕтĕмпех уçса пама, сÿтсе тухма хушнă. Вал сурана урăх тÿсме çук.

1938 çулти планпа кашни предприйатине ĕç тухăçлăхне хăпартас, продукци хакне чакарас тĕлĕшпе конкретлă заданисем панă, чылай предприйатисем тăрăх оборудованисемпе усă курас, чĕрĕ таварсемпе тата çунтармалисемпе усă курас тĕлĕшпе техника-економикăлă цифăрлă кăтартусене те çирĕплетнĕ. Апла пулсан, кашни савăт, кашни хапрăк вальли ĕçри çирĕп режима туса панă.

Епĕр Халăх Комиссарĕсен Советĕнче пур савăтсен планĕсене те, вăл савăтсен руководителĕсене чĕнсе уйрăмăн пăхса тухрăмăр. Кашни предприйатине кăтартусем панă, вăл кăтартусене ĕçе кĕртни тунă программăна пурнăçлама май парать.

Куратăр ĕнтĕ, кăçал промышленнăç планĕ питĕ те ответлă. Капитал хывни тăрăх вăл иртнĕ çулти планран 3,5 хут пысăкрах, тата чи палли вăл—плана çĕнĕ промышленнăç строительствине вайлăн сарса йарасси кĕрет. Çакăнпа пĕрлех халăх хуçалăхĕнче пысăк выран йышăнса тăракан савăтсем лартатпăр.

Иртнĕ çулта капитальнăй ĕçсен планĕ кăçалхинчен 3,5 хут сахалтарах пулнă тата ăна та 67 процент кăна пурнăçа кĕртнĕ пулсан, кăçал вара пирĕн плана тултарас тĕлĕшпе мĕн чухлĕ нумай ĕçлемелине есĕр хăвăрах туйатăр. Кусемсĕр пуçне тата çакна палăртмала: çĕнĕ обйектсем пурте, резинă савăчĕсĕр пуçне, кăçалах експлоатацине кĕмеле; гармонь хапрăкĕ тата сланĕц рудникĕ кăçалах та ĕнтĕ продукци памала. Курăнать ĕнтĕ, йулташсем, пирĕн çак 1938 çулта ĕçлемели нумай.

Йалхуçалăхĕ

Йалхуçалăх йенĕпе планра пысăкран та пысăк ĕçсем туса иртерме палăртнă, республикăра вăтам хисеппе гектартан 100 пăт тĕштырă туса илмеле, выльăхчĕрлĕх ĕрчетес ĕçе, сат тата пахча-çимĕç хуçалăхне тимлесех лайăхлатмала.

Акмали çĕр лаптăкĕ кăçал 698,2 пин гектартан 729,3 пин гектара çити ÿсет, кунта нумай çул ÿсекен курăксен çулмали лаптăкĕ те кĕрет. Акмали çĕр лаптăкĕсен структури кăçал вайлăн улшăнать, выльăхсене тăрантармали культурăсене акасси нумайланать.

Есĕр пĕлетĕр, йулташсем, пирĕн республикăра выльăх апачĕ йенĕпе уйрăмах ĕç начар тăрать, чылай районсенче выльăх апачĕ çитмест. Епĕ утă тата сĕтеклĕ апатсем çинчен калатăп, улăм пирĕн ылашшипех пур. Кăçалхи çул епĕр выльăх апачĕ йенĕпе ĕçе тимлесе лайăхлатас тетпĕр, выльăхсене тăрантармали культурăсене акмали çĕр лаптăкне 118,28 пин гектартан 128,4 пин гектара çитерме палăртрăмăр, вăл шутран нумай çул ÿсекен курăксем акмали çĕр лаптăкне 78,1 пин гектара, пĕр çул ÿсекен курăксем акмали çĕр лаптăкне 43,0 пин гектара тата силос тумали курăксем акмали çĕр лаптăкне 3 пин гектара çитерме палăртатпăр.

Кăçал пирĕн пусуçавăрнăшĕ арпашăнса кайнине пĕтерес тĕлĕшпе пысăк ĕç тумала. Республикăри мĕн пур колхозсенче сÿтсе-йавса тĕрĕс пусуçавăрнăшĕсем йышăнмала пулать, 1939 çултан пуçласа вара çав пусуçавăрнăшĕсене йатарласа государствă свидетельствисем парса çирĕплетмеле. Çак ĕçе епĕр питĕ те кирлĕ ĕç тесе шутлатпăр.

Кăçалхи çул суртлă вăрлăх ĕрчетес ыйтусене тĕпренех татса памали çул пулмала. Планпа пăхнă тăрăх, 1938 çулта кашни колхозăн йатарласа уйăрнă вăрлăх участкисенче хăйне вальли лайăх суртлă вăрлăхсем акса ÿстермеле; колхозсен вăрлăх участкисем çине акмали вăрлăхсене çĕнетессине тĕрĕс организацилес тесе, Çĕрĕç халăх комиссариачĕ йенĕпе йатарласах вăрлăх ĕрчетекен 11 хуçалăх тата сурт тĕрĕслекен 7 участкă тунă. Пирĕн колхозсенчи тырпул тухăçлăхне хăпартас йенĕпе çак ĕçсем калама çук пысăк выран йышăнса тăраççĕ.

План тăрăх кăçал пĕрчĕлĕ тата пăрçалă тĕп культурăсене йалтах суртлă вăрлăхсемпе çеç акмала. Халь ĕнтĕ тĕпрен илсен суртлă вăрлăхсене улăштарса пĕтереççĕ, тесе калама йурать, анчах Ишлей тата ытти хăшпĕр районсем çак ĕçе пурнăçа кĕртеймерĕç. Ишлей районĕнчи колхозсен 150 тоннă суртлă тулă илмеле пулнă, вĕсем ăна тумарĕç. Халь епĕр каласса таталтăмăр: çав вăрлăхсене Канашран Шупашкара машинăсемпе турттарса килеççĕ, вара вĕсем вăл вăрлăха Шупашкартан илсе кайаççĕ. Хăшпĕр районсенче туса çитермен ĕçсем йулнă, вĕсене туса çитерес пулать.

Чăн-чăнах 100 пăтлă тырпул туса илес тетпĕр пулсан, пирĕн кăçал агротехникăлă ĕçсен пĕтĕм комплексĕсене туса иртерес пулать, мĕншĕн тесен çапла тунипе çеç тырпул тухăçне чăннипех хăпартма пултаратпăр. Мĕнле-мĕнле агротехникăлă ĕçсем тумали çинчен виçĕ республикă хушшинче — Тутар, Мордва тата Чăваш АСС Республикĕсем хушшинче тунă социалисăмлă ăмăрту догăварĕнче тĕплĕн кăтартса панă, çавăнпа та епĕ кунта вĕсем çинчен тепĕр хут чарăнса тăмастăп. Çак ăмăртăва пуçаракан ĕсем епĕр пултăмăр, тесе паллă туса каласшăн епĕ, ăмăртăва пуçаракан ĕсем епĕр пулни—пирĕн çине уйрăмах пысăк ответлăх хурать. Епĕ çапла калама тивĕç: хальхи вăхăтра ăмăрту хĕрсех кайман-ха, çийелтен çеç пырать. Формальнă пăхас пулсан социалисăмлă ăмăрту догăварĕсем пур çĕрте те пур, вĕсене массăсемпе те сÿтсе-йавнă, анчах çав ăмăртура хĕрÿлĕх çук, тимлĕх çук, хĕрÿлĕхсĕр, тимлĕхсĕр ăмăрту вăл, урăхла каласан, чунпа-чĕрепе туймасăр ăмăртни вăл—çапах та ăмăрту мар.

Пирĕн—совет работникĕсен те, парти работникĕсен те республикăра, районсенче, йалсенче ăмăрту çынсен чĕри патне çитмеле тăвас пулать, ăмăрту çинчен каласнă чухне çынсен чĕри йаланхи пек мар, хăвăртрах таптăр. Çавăн чухне вара ăмăрту ăнăçлă пулать. Пирĕн çак ăмăртура тивĕçлипе сĕнтĕрекенсем пулас пулать.

Кăçалхи çул йалхуçалăхне механизацилес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса иртерме палăртнă. Çĕнĕрен пилĕк МТС, вăл шутран виççĕшне çураки тĕлне организацилеççĕ. План çинче 270 трактăр, тĕштырă пухса кĕртмели 200 комбайн, 50 сложнăй молотилкă, трактăрсен кăкарса пĕрчĕлĕ тырăсем акмали 300 сейалкă, 5 касăлă 300 плуг, 4 касăлă 161 плуг, 200 культиватăр т. ыт. те, т. ыт. те кÿрсе килме палăртнă. Пĕтĕмпе кăçалхи çулăн вĕçĕнче Чăваш республикĕн уйхирĕсенче 1.158 трактăр ĕçлемеле, вĕсен пултарулăхĕ 23.109 лаша вайĕ чухлĕ пулать; пирĕн уйхирсенче 330 комбайн, 500 ытла сложнăй молотилкă т. ыт. те ĕçлемеле.

Кăçалхи çул колхозсен акнă çĕр лаптăкĕнчен 82 процентне машинă-трактăрлă станцисем ĕçлесе параççĕ. Çак вăл йалхуçалăхне хăпартма пирĕн колхозниксене парти Тĕп Комитечĕпе Правительствă калама çук пысăк пулăшу пани, Сталин йулташ калама çук пысăк пулăшу пани пулать.

Пирĕн кăçал йалхуçалăх производствин техникине пит лайăх вĕренсе çитнĕ çынсем, сложнăй машинăсемпе ĕçлеме пит лайăх вĕренсе çитнĕ çынсем калама çук нумай пулаççĕ. Пирĕн кăçал трактăриссем 3.000 ытларах, комбайнерсемпе вĕсен помошникĕсем 600 çына йахăн, механиксем 100 ытларах, машинисем 1.000 ытларах, шоферсем 100 çын ытла т. ыт. те ĕçлемеле. Çак çынсем, епĕр вĕсене тĕрĕс организацилесен, йалхуçалăхĕнче пысăк ĕç тума пултараççĕ. Задачă çакăнта пулать: МТС-не чăн-чăнах большевикла йĕртсе пырас пулать, райĕçтăвком председателĕсем, йалсовет председателĕсем МТС ĕçĕнчи çитменлĕхсене айакран пăхса тăракансем ан пулччăр, вĕсем чăн-чăн руководителĕсем пулччăр тата МТС-семпе колхозсене активлăн пулăшса пычччăр.

Пирĕн социалисăмлă ăмăртăва тата стахановла йухăма массăлăн сармала, ăмăрту чăннипех пĕтĕм халăх йухăмĕ пултăр тесен, малтисен опытне йулса пыракансене парас пулать.

Пирĕн кăçал МТС-сенче горючине перекетлесси çине тĕплĕн çаварăнса пăхмала. Горючине перекетлĕн тыткалас пулать, вăл хаклă йапала, горючи расхутлас тĕлĕшпе кашни трактăрăн татăклă нормă пур. Горючине расхутлас ыйтуна пурин те—хуçалăх работникĕсен те, советпа парти работникĕсен те ĕçлемеле.

Епĕ çакăн çинчен паллă туса каласшăн: трактăриссене ку тариччченех ĕçукçи парса татăлман районсем те пур-ха пирĕн, ку вăл пирĕншĕн намăс ĕç пулса тăрать, Трактăриссене, иртнĕ çулта ĕçленĕшĕн ĕçукçи парса татманшăн пире Тĕпкомпа Халăх Комиссарĕсен Совечĕ умĕнче намăс. Тепĕр 2—3 ернерен трактăриссен каллех сухалама тата акма тухмала, а епĕр пĕлтĕрхишĕн те тÿлесе татман. Çав хушăрах пур условисем те аван пулнă. Кăçалхи çул колхозсенче тырпул лайăх, укçа нумай, çапах та трактăриссене тÿлесе татма пултарайман. Çак вăл райĕçтăвкомсемпе Çĕрĕç халăх комиссариачĕ çине тăманнипе çавăн пек пулчĕ, епĕр çак ĕçре сывăрса йултăмăр. Пирĕн хальхи задачă вăл — трактăриссене халех тÿлесе татасси пулать, трактăриссем акара йуратса ĕçлеччĕр, ĕçлесшĕн хыпса çунччăр.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулхи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмели плана халь çирĕплетме тăратмаст. Кăçалхи çул Сойуз правительстви государствă планне парать. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес йенĕпе пирĕн умра чылай пит пысăк задачăсем тăраççĕ. Пĕрремĕш — пирĕн кăçал хăш районра мĕнле ăратлă выльăх ĕрчетес ыйтусене хатĕрлесе халăх хушшинче, мĕн пур районсенче, мĕн пур колхозсенче сÿтсе-йавас пулать, çак ĕçе йĕркелесе йамала тата сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерсе хумала. Иккĕмĕш—сыснасемпе сурăхсене талкишпех метизацилес пулать. Ăратлăха выльăхсем пирĕн çителĕклĕ, çак ĕçе организацилемеле çеç. Виççĕмĕш—лашасем тата майракалă шултра выльăхсем йенĕпе ăратлă ăйăрсемпе, ăратлă вăкăрсемпе май пур таранах усă курас пулать. Тĕллесе каласан, искусственнăй майпа пĕтĕлентерессине пысăккăн сармала. Çак тĕлĕшпе тимлесех ĕçлетпĕр пулсан, вара епĕр 1938 çулта выльăхсен пахалăхне чылайах аванлатма пултаратпăр. Анчах та выльăхсене чуптарас кампанине организацилес тĕлĕшпе халех ĕçлеме тытăнмала, вăхăт иртсе кайсан тÿрлетме йăвăр пулать.

Колхозник хуçалăхĕсене ĕне туйантарас ыйтăва уйрăмах çивĕччĕн лартма кирлĕ. Ку тĕлĕшпе пирĕн ĕç пачах çителĕксĕр пырать, тесе калама тивĕç епĕ. Парти Тĕпкомĕпе правительствă колхозниксене пурне те ĕне туйантарасси çинчен йышăннă решенисене пурнăçа кĕртмесĕрех хăварас тĕлĕшпе сăтăрçăсем сахал мар тăрăшрĕç. Вĕсем çакăнта ĕçе тĕрĕссипе кăтартмасăр пытарса пурăннă. 1938 çулхи йанвар уйăхĕнче выльăхсене сырса тухни выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре сăтăрçăсен йулашкийĕсем нумайăшне уçса палăртрĕ. Сăмахран, Вăрнар районĕнче 1.624 колхозник хуçалăхĕн йе 18,9 процентăн ĕне те, пăру та çук. Куславкка районĕнче 2.609 колхозник хуçалăхĕн йе 34,7 процентăн ĕне те, пăру та çук. Хĕрлĕ Чутай районĕнче ĕне те, пăру та усраман хуçалăхсем 1.470 йе 22,4 процент. Ытти чылай районсенче те—Кувакинă, Пăрачкав, Вăрнар,

(Малали 3-мĕш страницăра).

Л. С. СПАСĂВ йулташ доклачĕн малали

Шăхасан, Шăнкăртам тата Тăвай районĕсенче—ĕçсем аванах мар. Çав вăхăтрах пирĕн чылай районсенче йалхуçалăх ертелĕн уставне тÿременех пăспписем пур. Сăмахран, Хĕрлĕ Чутай районĕнче колхозник хуçалăхĕсенчен 2,9 процентĕ 2—3 ĕне усрать. Елĕк районĕнче çавăн пек хуçалăхсем 3,1 процент, Вăрнар районĕнче — 2,91 процент, Йĕпреç районĕнче—2,6 проц., Ишлей районĕнче—2,8 проц., Турхан районĕнче—2,2 проц., Тутаркас районĕнче 4,2 проц. т. ыт. те. Выљăхсене çырса тухни малала тата пирĕн лаша туйанна колхозниксем чылай пуррине кăтартса пачĕ. Çак вăл йалхуçалăх ертелĕн уставне тÿременех пăсни, колхоз стройĕн принципĕсене тÿременех пăсни пулать. Çаксене пурне те тÿрлетмеле.

Сăвакан ĕнесем çинчен калас пулсан, Куславкка районĕнчи колхозниксен 48,3 проценчĕн ĕне çук, урăхла каласан, колхозник хуçалăхĕсенчен çурри ĕне усрамасть. Чăпах та, ĕне усраман колхозниксем ытти районсенче сахалтарах, анчах вĕсем кашни районрах пур. Çак ĕçе тимлесех хутшăнас пулать те тĕпренех улшăну тăвас пулать, колхозниксене ĕне усракан тăвас пулать.

Çакна та калама тивĕçлĕ, йулташсем: нимĕнле выљăх та усраман колхозник хуçалăхĕсем те сахал мар-ха пирĕн. Выљăх-чĕрлĕх переписĕ епĕр çак тĕлĕшпе пит начар ĕçленине уçса палăртрĕ. Акă Куславкка районнех илĕр, унта колхозниксенчен 14,6 проценчĕ пачах нимĕнле выљăх та усрамасть, ĕнесем çеç те мар, сурăхсем те çук.

Çак тĕлĕшпе ĕç уйрăмах начар тăракан районсенчи хăшпĕр руководителĕсем çапла каласçĕ: пирĕн колхозниксем ĕне усрасшăн мар, выљăх ĕрчетесшĕн мар,—тесçĕ.

Паллăх ĕнтĕ, çапла калани вăл пустуй йапала çеç. Пирĕн колхозниксем ĕнешĕн, выљăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн тăрăшаççĕ, епĕр колхозниксене ĕне туйанма тата ытти выљăхсем туйанма пулăшма тивĕçлĕ. Çавăн пек пулăшу пуринчен ытла Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозниксене кирлĕ, унта нимĕнле выљăх та усраман колхозниксем 11,6 процент, Кувакинă районĕнче—16,2 процент, Пăрачкав районĕнче—12,2 проц., Вăрмар районĕнче —11,89 проц., Шăнкăртам районĕнче — 12,5 проц., Улатăр районĕнче — 12,7 процент.

Колхозниксене ĕне туйантарас тата выљăх туйантарас тĕлĕшпе пирĕн тимлесех ĕçе тытăнас пулать. Суралакан çамрăк пăрусене йалтах сыхласа хăварас тесен, мĕн тумаллине пурне те тăвас пулать пирĕн. Мĕншĕн тесен, çав сынсене пăру туйантарма калама çук нумай пăру кирлĕ пулать. Çакна пирĕн шута илмеле.

Сысна ĕрчетес тĕлĕшпе те ĕçсем пирĕн пит начар тăраççĕ. Сысна усраман хуçалăхсем пит нумай пирĕн. Сăмахран, Кувакинă районĕнчи колхозник хуçалăхĕсенчен 77 проценчĕ, Куславкка районĕнче—73,9 проц. сысна усрамаççĕ, ăна вĕсем, паллах, сыснана йуратманран мар усрамаççĕ. Çак вăл йалтах массăсем хушшинче кирлĕ пек ĕçлеменнинчен, колхозсенче çак ĕçе организацилеменнинчен килет.

Пирĕн мĕн пур районсемпе колхозсенче выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ыйтусене сÿтсе-йавса выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе çĕклесе йарас йенĕпе тĕпренех улшăну тумала, çак ĕçе тума халăха çĕклентермеле.

Сат ĕçĕпе пахча-çимĕç ĕç йенĕпе те планра çавăн пекех пысăк ĕçсем тума палăртнă. Пирĕн кăçал кивĕ сатсене йĕркене кĕртмеле. Пирĕн вĕсем сахал мар, анчах та вĕсене пит йухăнтарса йанă.

Çĕнĕрен сатсем тумала, сат ÿстерес тĕлĕшпе кашни районах план панă. Пирĕн республикă Горький крайĕн составĕнче тăнă вăхăтра пирĕн умма лартнă задачăна епĕр хађте пурнăçа кĕртмен. Унчухне кашни колхозра 3—5 гектар сат ĕрчетесси çинчен йышăннă пулнă. Çак задачăна нумай колхозсем ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕç, анчах та çак решени сынчен хăшпĕр çĕрте манса кайнă пулмала.

Кăçал пирĕн парникпе теплицă хуçалăхне организацилес йенĕпе çине тăрсах ĕçе тытăнас пулать, хуласемпе промышленнăçлă центрсем ир пулакан пахча çимĕçсем илме пултарччăр.

Пахча-çимĕçсене массăлă лартса тăвас пирки çакна каламала: кăçал пахча-çимĕçсем лартас плана 1937 çулхинчен 1.900 гектар ÿстернĕ. Анчах та паллă тăвас пулать—заданисене мĕнле вырнаçтарнине тĕрĕслесен вырăнсенче çак ĕçре пăтраштарса пĕтерни курăнчĕ. Сăмахран, Хĕрлĕ Чутай районĕнче плана районри мĕн пур колхозсем тăрăх валеçсе панă, 50—60 хуçалăхлă хăшпĕр колхозсене 0,05 гектар акма задани панă. Çапла хăтлаппипе пахча-çимĕçсене сутлăх тума май çуккине ăнланмала мар-и-ха ĕнтĕ?

Пахча-çимĕçсене пирĕн сутлăх лартса тăвас пулать. Çавăн пек хуçалăх тăвас тесен, пахча-çимĕç лартмали заданине паллăрах колхозсене çеç парас пулать, çавăн пек колхозсенче пахча-çимĕç куђтурисене лартнă çĕр лаптăкĕ чылай пысăк пултăр. Хăйне çиме колхозник пахча-çимĕç хăйĕн анкартипе, пасма çĕр участки çине лартма пултарать.

Йалхуçалăх ертелĕн уставĕ тăрăх, пахча-çимĕç лартса тума кашни колхозникех пасма çĕрĕ уйăрса панă. Хĕрлĕ Чутайра çакна ăнланман пулмала. Ытти хăшпĕр вырăнсенче те çавăн пекех, тесе калаççĕ. Çакна пур çĕрте те тÿрлетес пулать, пахча-çимĕç лартса тумалли заказа пĕр-пĕр колхозсене çеç памала хăнăхусем пур колхозсене тата чи малтан хула сывăхĕнчи, станци сывăхĕнчи колхозсене памала.

Халăх хуçалăхĕн 1938 çулти йалхуçалăхне пысăк аплăхпа çĕклеме палăртать. Халĕ ĕç колхозсенчи тата МТС-сенчи ĕçсене организацилессинче, суракине лайăх ирттерессинче, хуçалăх ĕçсен пĕтĕм тапхăрĕнче агротехникăла ĕçсене организацилĕн тăвассинче. Тырпул тухăçлăхне ÿстерес, выљăх-чĕрлĕх ĕрчетессине вăйлатас, сат тата пахчасен хуçалăхне лайăхлатас йенĕпе тăракан задачăсем тавра колхозниксен массисен тата МТС работникĕсен социалисăмла ăмăртуне чăнласах вăйлатни кирлĕ.

Колхозсене сталинла йулхуçалăх ертелĕн уставĕ тăрăх ĕçлекен тумала. Колхозсене çирĕплетсе пур колхозниксене те пуйан та куђтурăлă пурнăçпа пурнакан тума колхозниксемпе колхозницăсен массине колхоз производствине малала çĕклесе пырассишĕн кĕрешме организацилемеле.

Апла пулсан, халĕ ĕнтĕ пĕтĕм ĕç ăнăçлăхĕ хăйĕн ĕç техникине алла илнĕ колхозниксенче хăйсенче тата епĕр колхоз строительствине йĕртсе пынинче пулать.

Йединоличниксем тĕлĕшĕпе çакна каламала, пирĕн хресченсен чылай пайĕ çаплах колхоз тулашĕнче тăрас йĕркене пĕтерес пулать. Пирĕн, йулташсем, йединоличниксене колхоза кĕме пулăшмала, вĕсене социалисăмшăн активлăн кĕрешекен бойецсен ретне хăвăртрах тăма пулăшмала, йе пуйан та куђтурăлă пурнăç колхозра çеç илме пулать.

Районри организацисен, йалсоветсен, колхоз активĕсен йединоличниксен хушшинче организацилĕ тата ăнлантару ĕçне анлăн сармала, йединоличниксене хĕсĕрлеме пăхакан тата çилентерекен елементсене хыттăн çапмала.

Пирĕн кăçал йалхуçалăхĕнче нихăçанхинчен те лайăхрах ĕçлемеле, йалхуçалăхĕнчи сăтăрçăсен сийенлĕ ĕçĕсене пĕтермеле тăвас пулать, пур колхозниксем тата пĕтĕм республик валђи пĕтĕм сойузри йалхуçалăх выставкинче пулма правă илмешкĕн çĕнĕ ÿсĕмсем тумала. Çаксене тунă çĕрти чи пĕрремĕш задачă вăл,—суракине ăнăçлăн ирттересси пулса тăрать.

Транспăрт тата çыхăну

Транспăрт ваљљи кăçал 16.811,7 пин тенкĕ укçа хывмала, вăл шутран Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçула тума 5,5 мĕлйун тенкĕ, шыв транспăрчĕ çине 1574,4 пин тенкĕ, ку шутра шыв хĕрĕнчи вокзала тума 600 пин тенкĕ, чул сарнă тата лайăхлатнă çулсем тунă çĕре 10.107 пин тенкĕ автомашинăсем илме 130 пин тенкĕ уйăрнă.

Пирĕн кăçал чул сарнă çулсене йĕркене кĕртессишĕн пысăк тимлĕхпе ĕçлемеле пулать. Иртнĕ кĕрkунне пирĕн çулйĕрсем йур айне пур çĕрте те лайăх пахалăхпа кĕмен. Çĕнĕ çулсем тăвас йенĕпе те чылай çĕрте ĕç йапăх тăрать,—бутовăй чул кăларса хатĕрлемен, йăвăç материалĕсем хатĕр мар,—кусем пысăк çитменлĕхсем. Пирĕн çулйĕр строительстви ĕçне Чăваш республикĕн çулйĕр йенĕпе пулнă чаплăхне хамăр алăра пулмала тăвас май организацилемеле. Апла тума çулсене пăхса усрассине лайăх организацилени кирлĕ.

Пĕртакçă автохуçалăх çинчен. Пирĕн автохуçалăх йĕркесĕре тухнă. Пур машинсенчен çуррине йахăн ахаљ лараççĕ. Машинăсем пирĕн, бензин çук тата кирек мĕн çитмен пирки мар, гаражсенче машинсем çинче чăн-чăн хуçа çук пирки тăраççĕ. Чăрсăрлăхпа пигĕ нумай машинăсем çĕмĕреççĕ, машинăсене çумаççĕ, машинă хăйне час-часах çуса тасатнине, лайăх пăхса усранине йуратать. Машинăсене вăхăтра йусамала. Пирĕн машинăсене лайăх пăхса тытса усрассине организацилемеле.

Çыхăну ĕçĕсем йенĕпе кăçал ку тарана çитиччен телефонсем пулман 86 йалсовета телефон лартма палăртатпăр. Хĕрлĕ Чутай районĕнче 19 йалсовета телефон кĕртмеле. Телефон кĕртмен йалсоветсем Улатăр, Ишлей тата ытти районсенче те пур.

Кăçал иккĕмĕш проводсем карса районсем хушшинчи çыхăнăва та лайăхлатмала.

Радиоузĕлсем йенĕпе те ĕç чылай лайăхланмала: Пăрачкавра, Хĕрлĕ Чутайра, Вăрнарта 500 ваттлă радиоузĕлсем, Кувакинăра 100 ваттлă, Шăнкăртамра 200 ваттлă радиоузĕл лартатпăр т. ыт. те. Анчах та каламала, çыхăну ĕçĕ техникă йенчен питех аталта йулать-ха. Тума палăртнисем çыхăну ĕçĕсене чылай лайăхлатмала.

Суту-илÿ

1938 çулти планра республикре суту-илÿ ĕçне лайăхлатас ыйтусем çине уйрăмăнах хытă çавăрăнса пăхнă. Çăмăл промышленнăç кăларакан продукци хисепĕ тата продовољстви чĕрĕ таварсене хатĕрлесси ÿсни кăçал ĕççыннисем тĕрлĕрен таварсем ыйтнине лайăхрах пурнăçа кĕртме майсем туса параççĕ. 1938 çулта республикре таварçавăрнăш 321 мĕлйун тенкĕне çити ÿсмеле, 1937 çулта 281,6 мĕлйун тенкĕ пулнă, ÿсĕм 14 процент шутланать. Çапла вара республикре пурăнакан кашни çын пуçне 321—330 тенкĕлĕх тавар сутăнмала. Пилĕк çынтан тăракан кашни семйе çине 1600—1700 тенкĕлĕх тавар тивет.

Кăçал мануфактурăсем, çĕленĕ йапаласем, урана тăхăнмалисем, çыхса тунă йапаласем т. ыт. те нумайрах пулаççĕ. Апат-çимĕç таварĕсемпе суту-илÿ тăвасси вăйлăн ÿсет. Таварсем çÿретекен çет те ÿсет. Пур районсенче те райпотребсойузсем организациленĕ.

Пирĕн суту-илÿ ĕçне организацилессинче туса çитерменнисем нумай, тесе шутлатпăр епĕр. Сатăрçăсем суту-илÿве йапăхтарнă, аппаратăн хăшпĕр пайне пăснă. Суту-илÿ организацисен финанс хуçалăхне йухăнтарнă. Анчах та сатăрçăсен йулашкисене, суту-илÿ организацисенчи тăшмансен сийенлĕ ĕçĕсене пĕтересси çителĕксĕр пулса пырать. Растратăсене шыраса илесси, дебиторла парăмсене пĕтерессине йапăххăн пырать. Шанчăксăр çынсем вырăнсенчех йулаççĕ-ха. Суту-илÿ организацисен çĕнĕ руководителĕсем çав шанчăксăр елементсене хăваласа кăлармаççĕ, аппарата çав шанчăксăр елементсенчен тимлĕн тасатмаççĕ. Йе унта йе кунта тăвар, сахăр спичкă, махоркă, супăњ пулманнине мĕнле ăнланмала-ха? Çăкăрпа сутă тăвассинче те йĕркесĕрлĕхсем пулаççĕ. Кунашкал фактăсене суту-илÿн хăшпĕр аппаратĕнче тăшмансем йе вĕсен йулашкийĕсем ларнипе çеç хаклама пулать. Вăл елементсене çапса аркатмала пирĕн.

Пирĕн çĕршывра тата республикăра таварсем ытлашшипех пур, вĕсене республике илсе килессине тата хулара та йалта та суту-илÿ тăвассине лайăх организацилени çеç кирлĕ.

Районсенчи руководителсен районра суту-илÿ ĕçне кирлĕ пек йĕркеледессишĕн, лавкасемпе магазинсенче халăха кирлĕ таварсем те çителĕклĕ пулмала тăвассишĕн тăрăшмала. Апла тума суту-илÿ организацисене йертсе пыни суту-илÿ работникĕсене час-часах заводит туни кирлĕ. Заводит тумасан, зарайадка памасан сутăçсем çывăрса кайаççĕ. Çакна асра тытас пулать, сехет те кунсеренех заводит тума ыйтать, кооператорсем сахалтан та вунă кунта пĕр хут зарйадкă пама ыйтаççĕ.

Йулташсем, пирĕн кăçал суту-илÿ ĕçне тĕпренех лайăхлатмала. Епĕр халĕ республикре табак, саран атă-пушмак, нефт, сахар т. ыт. промышленнăçсен базисене организацилетпĕр, çаксем вĕсем республике таварсем илсе килессине лайăхлатмала.

Пĕрлешÿлĕ апатланассине те чылай лайăхлатма пăхнă. Çĕнĕ столовăйсем, ресторансем, чайнăйсем уçăлаççĕ. Тĕслĕхрен, Шупашкарта епĕр пысăк столовăй, унтан Атăл çинче ресторан уçасшăн.

Чăвашсойуз йенĕпе кăçал виçĕ çĕнĕ ресторан, икĕ столовăй тата 68 çĕрте чайнăй уçатпăр.

Епĕр кашни пасарта лайăх чайнăй уçма решени йышăнтамăр. Пирĕн пур çĕрте те чайнăйсем пулмала тăвас пулать. Чайнăйсенче пур кирлĕ продуктăсем те: сыр, калбаси, тĕрлĕрен консервăсем, çăкăр-булкă таварĕсем т. ыт. те пулмала. Çак ĕçсене пирĕн çине тăрсах тумала пулать.

Пирĕн суту-илÿ ĕçне куђтурă кĕртмеле. Суту-илÿ ĕçĕнче куђтурăлăх пачах та çителĕксĕр, суту-илÿ ĕçĕнче типтерсĕрлĕх нумай; тавар илекенсем çине йытăла пăхнине кăтартакан фактсем те тĕл пулаççĕ. Хăйсене халăха таварсем сутма лартнă пулсан та халăх магазина пынипе килĕшмен прикашчиксем пур. Ку ĕнтĕ çав çынсем хушшинче воспитани ĕçĕ айалта тăнине кăтартать. Ку ĕнтĕ суту-илÿ тăвакансем хăйсен ĕçĕн пахалăхне ăнланса илменни çинчен калать. Кăна халех йусамала.

Вĕсемсĕр пуçне пирĕн рекламă лайăх организацилемеле, кăна пирĕн нимĕнле те организацилеменха. Шупашкара кашни куллен, вакунпа шутласан, икĕ виçĕ вакун тавар килет. Анчах мĕнле таварсем илсе килни, сутни çинчен хаçатсем çинче те магазинсем умĕнчи пĕлтерÿсем çинче нихăçан та ниçта та пĕлме çук. Халăх магазинсенче мĕн пурри, ăçта мĕн илме пулни çинчен пĕлесшĕн, çак йенĕпе те пирĕн халăх ыйтнине пурнăça кĕртмеле.

Çав ĕçсене тăвассишĕн тимлесех ĕçлеме тытăнмала, ăна организацилемеле. Суту-илÿ ĕçĕ халăхăн ÿссе пыракан ыйтăвĕсенчен йулса пынине тек чăтма çук.

Коммуналлă çуртйĕр хуçалăхĕ

Йулташсем, 1938 çул рабочисен тата колхозниксен массисен пурнăçне ку таранччен хинчен пысăкраххăн лайăхлатмали çулталăк пулса тăрĕ. 1938 çулхи план хамăр республикри рабочисен, служăщчисен тата колхозниксен пурнăçне лайăхлатас йенĕпе çĕнĕ çĕкленÿ тума май парать.

Пурăнмали çуртсем рабочи çемйин пурнăçне лайăхлатма кирлĕ услови пулса тăни çинчен есĕр пурте пĕлетĕр, çакăнпа пирĕн рабочисен пурăнмали çурчĕсем çине вирлĕн çавăрăнса пăхмала. Кăçал епĕр пурăнмали çуртйĕрсем тунă çĕре 6 мĕлйун тенкĕ хывма палартрăмăр, ку шутран исполкомсен строительствине 1855 пин тенкĕ хывмала. Пĕр мĕлйун тенкĕ йахăн çуртйĕрсене йусанă çĕре пама палăртнă. Шупашкарта 26 хватерлĕ, 12 хватерлĕ, 24 хватерлĕ пĕтĕмпе илсен 3,5 пин тваткăл метр пурăнмали плошчăдлĕ çуртсене туса пĕтереççĕ. Промышленнăç йенĕпе те çуртйĕр строительстви чылай пулать.

Хватер условисем Канашри вакунсем йусакан савăтра та нумай лайăхланаççĕ. Унта çуртйĕр строительствине 2 мĕлйун тенкĕ хывма палăртнă. Хватер условисем Çĕмĕрлере те лайăхланаççĕ.

Кăçалхи çул коммуналлă строительствă йенĕпе те пысăк ĕçсем туса ирттермеле. Коммуналлă строительствăна кăçал 4600 пин тенкĕ хывма палăртнă, район центăрсене лайăхлатма хывакан укçана пĕрле илсен коммуналлă строительствăна 5 мĕлйун тенкĕ хывмала, вăл шутран коммуналлă хуçалăх комиссариачĕ тăрăх 3.124 пин тенкĕ хывмала пулать.

Республик столицинче—Шупашкарта кăçал халĕ ĕçлекен електростанцине пысăклатмала. Çавнашкалах Шупашкар йусанă, нумайлатнă електроçет илет, водопровода аслăлатмала, Карл Маркс урамне пристăнь патĕнчен пуçласа пединститут тĕлне çитиччен асфађт сармала. Ку вара чăн-чăн столица урамĕ пулать.

Улатăр хули те лайăхланать. Унти електростанцинче тепĕр 600 лаша вăйлĕ аггрегат лартаççĕ, водопровод, мунча т. ыт. те туса çитереççĕ.

Канаш та лайăхланать, уйрăмăн илсен Канашри чи кирлĕ ыйту пулнă мунча тăвасси пурнăçа кĕрет, Канашра çĕнĕ мунча пулать. Унта епĕр халăха шыва кĕмелĕхех пĕве тăвасшăн, ку пушартан сыхланас йенĕпе те пысăк вырăн йышăнать.

Планпа район центрĕсенчи коммуналлă предприйатисене лайăхлатас тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем тума палăртнă. Пĕтĕмĕшпе илсен пысăк программă палăртнă, мĕн ĕçлемели пулать.

Рабочисен тата служăщчисен пурнăçне вăйлăн лайăхлатмали условисем çителĕклĕ пур. Ĕç ăнăçлăхе пирĕнтен, руководительсенчен килет. Çак пысăк программăна пурнăça кĕртмеле тăвас пулать.

Куђтурă тата сывлăха сыхлав

1938 çулти планта куђтурă ĕçĕсене пысăккăн сарма палăртнă. Кăçал пирĕн шкулсенче 1—4-мĕш классен шучĕ 306 комплект ÿсеççĕ, 1937 çулта 3194 клас пулнă пулсан, кăçал 3500 клас пулать, 5—7-мĕш классем 62 комплект ÿсеççĕ. 1937 çулта 5—7-мĕш клессем 1774 пулнă пулсан, кăçал пĕтĕмпе 1836 клас пулать. Вăтам шкулсенче 75 клас ÿсмеле, 230 клас пулнă пулсан 305 клас пулмала. Çапла епĕр кăçал хамăр шкулсенче çĕнĕрен 443 клас уçатпăр, вăл шутран 137 клас тулли мар вăтам шкулсенче тата вăтам шкулсенче уçăлаççĕ.

Çапла вара пирĕн кăçал шкула çÿремели ачасене пурне те çичĕ çул вĕрентессипе çавăрса илессине пурнăça кĕртме май паракан условисем пулаççĕ. Тулли мар вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнисенчен виççĕмĕщ пайĕн вăтам шкулсемпе техникумсене вĕренме кĕме май пулать.

Пуçламĕш, тулли мар вăтам тата вăтам шкулсенче вĕренекенсем 1937 çулта 174,6 пин пулнă, кăçал вĕсен шучĕ 193.200 çынна çитет, урăхла каласан, вĕренекенсен хисепĕ 20 пин çын ÿсет. Техникумсемпе аслă шкулсенче вĕренекенсен хисепĕ те нумай ÿсет.

1938 çулта çĕнĕрен 32 шкул тумала, шкулсем тунă çĕре 4231 пин тенкĕ расхутламала. Çав шкулсене тунипе епĕр 7700 ачана вĕренме лайăх шкулсем паратпăр. Шупашкарта 880 ача вĕрентмелĕх шкул тумала, ку хулари чи пысăк çурт пулать. Улатăрта 400 ача вĕрентмелĕх шкул тумала. Кăçалах пединститутăн общежитине, Канашри педучилищă çуртне т. ыт. туса çитермеле.

Çитĕннисене вĕрентес тĕлĕшпе те чылай ĕçсем тумала. Иртнĕ çулта çитĕннисем 2200 çын вĕреннĕ, кăçал 5 пин çын вĕрентме шутлатпăр. Уйрăмăнах йалсем йенĕпе пысăк ÿсĕм пулмала. Йалсенче иртнĕ çулта 700 çын вĕреннĕ, кăçал 3000 çын вĕрентмеле. Бÿджет шучĕпе хут пĕлменнисене 10 пин çын, хут сахал пĕлекенсене 20 пин çын вĕрентмеле. Шкул çулне çитмен ачасене усрамалли çуртсен шучĕ те нумай ÿсет, кăçал 200 çурт пулать, вĕсенче 51 пин ача пулмала, иртнĕ çулта 20 пин ача пулнă.

Кăçал халăха кино кăтартасси те нумай лайăхланмала. Ку ĕçе вăйлатнă çĕре 714 пин тенкĕ хывма палăртнă. Çĕмĕрлере калаçакан кинотеатр пулать, епĕр кăçал пур районта та калаçакан кино йе передвижкă пулмала тăвасшăн. Халăх калаçакан кино курасшăн, епĕр ăна кăçалах туса çитермеле тăвасшăн.

Кăçалхи çул епĕр шкулсенчи оборудованисене лайăхлатас тĕлĕшпе хыттăн ĕçлесшĕн, вăтам тата тулли мар вăтам шкулсене вĕренÿ оборудованисене çителĕклĕ памала тăвасшăн епĕр. Ку тĕлĕшпе пирĕн ĕçсем халђхи вăхăтра питех те йапăх. Пирĕн халĕ 6—7—10 классенче йапаласене кĕнекесемпе уçă курни тăрăх çеç вĕренеççĕ, нимĕнле приборсем те çук. Епĕр хăвăрах пĕлетĕр химие, физикăна, механикăна класри доскапа тата пурăпа уçă курса кăна çеç вĕренме йавăр. Çапла пулăçăран та ĕнтĕ вĕренÿ пахалăхĕ начар, вĕренекенсем тивĕçлĕн ăлкĕрсе пыраймаççĕ. Епĕр кăçал пур вăтам тата тулли мар вăтам шкулсенче вĕренме кирлĕ оборудованисем çителĕклĕ памала тăвасшăн.

Сывлăха сыхлассипе йенĕпе кăçалхи çул ĕçсене пысăккăн лайăхлатмала. Бођницăсенче 1937 çулта 1942 койкă пулнă пулсан, кăçал 2164 койкă пулмала. Бођницăсенче чирлĕ çынсене апат-çимĕç, тумтирсем, емелсем, инструментсем тата ытти йенсемпе пулăшу парассине лайăхлатас тĕлĕшпе те нумай ĕçсем тума палăртнă. Врачсен йышĕ те нумай ÿсет. Малтанах тума пуçланă бођницăсене, ача çуратмали çуртсене, Шупашкарти куç бођницине т. ыт. туса пĕтермеле. Кăçал Вăрнарта çĕнĕрен 100 ача вырнаçмалăх ачасене туберкуљозран сиплекен санатори ĕçлеме пуçлать, Чуварлейри санаторине те пысăклататпăр, икĕ çĕрте: Шупашкарта, Канашра акушеркăсен шкулĕсем туса пĕтереççĕ. Çутĕç тата Сывлăха сыхлав халăх комиссариачĕсем йенĕпе кăçал пĕтĕмпе 9.161,5 пин тенкĕ укçа хыватпăр.

Атăр-ха халĕ 1938 çулти строительствă ĕçĕсен пысăкăшне лайăхраххăн пĕлме итогсем туса пăхар. Иртнĕ 1937 çулта пĕтĕм капитађнай ĕçсен пысăкăшĕ 36.138,2 пин тенкĕ пулнă, 1938 çулта лимит тăрăх çеç укçа хывмали капитађнай ĕçсен пысăкăшĕ 73.442,6 пин тенкĕ пулать, урăхла каласан иртнĕ çулхинчен икĕ хут нумайрах. Лимитсĕмĕр пуçне хывнине шута илсен укçа-тенкĕ хывасси пĕтĕмпе 81.227 пин тенкĕ пулать, ку хисене çĕнĕрен машина-трактăр мастерскойĕсем туни тата йалхуçалăх йенĕпе 15—16 мĕлйун тенкĕ кредит пани кĕмест.

Çакнашкал пысăк программăна пурнăça кĕртессишĕн ĕçлемеле пулать пирĕн 1938 çулта, пысăк тимлĕхпе тата пысăк организацилĕхпе ĕçлени кирлĕ.

1938 çулти бÿджет

Çав ĕçсен пысăк планне финанс планĕне, пĕр йенчен бÿджетпа (çак йенĕпе бÿджет строительствă программине пурнăça кĕрме май паракан тĕп услови пулса тăрать) тата предприйатисен хăйсен финанс планĕпе çирĕплетнĕ.

Республикăн халăх хуçалăхĕ ÿсни тата ĕççыннисен массисен пурнăçĕ лайăхланса пыни бÿджетра питех те уççăн курăнса тăрать. Бÿджет пирĕн ÿсĕм мĕнле пулнипе, халăхсемшĕн тăрăшнипе кус кĕски йевĕрлĕ кăтартаканни пулса тăрать.

Республикăн 1938 çулти бÿджетăн пысăкăшĕ пĕтĕмпе 129.087 пин тенкĕ шутланать, çав шутран халăх хуçалăхне вăйлатнă çĕре 16.935 пин тенкĕ хывмала.

Çак укçа-тенкĕне халăх хуçалăхĕн уйрăм отрăçлисене халăх хуçалăх планĕн хисепĕпе килĕшни тăрăх пайланă: промышленнăç çине 4852 пин тенкĕ, йалхуçалăхне 4.890 пин тенкĕ, коммуналлă çуртйĕр строительствине 4809 пин тенкĕ, вăрман хуçалăхне 608 пин тенкĕ, суту-илÿ йенĕпе строительствă ĕçĕсене тума—422 пин тенкĕ, транспăрта—1534 пин тенкĕ, çыхăну ĕçне лайăхлатма—420 пин тенкĕ хывмала.

Социаллă-куђтурă ĕçсене тума 81348 пин тенкĕ вырăнне 95.505 пин тенкĕ, апла пулсан 14.157 пин тенкĕ ытларах хывнă. Кунтан республик бÿджечĕн 4 пайĕнчен виçĕ пайне çутĕç тата сывлăха сыхлав ĕçсене тунă çĕре хывни курăнать. Ку совет государствин бÿджечĕн паха йенĕ пулать. Совет государстви халăхăн социаллă-куђтурă ыйтăвĕсене пурнăçлă тăвассишĕн питех хытă тăрăшать.

Иртнĕ çулта халăха вĕрентес ĕçсене туса пыма 63 мĕлйун тенкĕ хывнă пулсан, кăçал 68.101 пин тенкĕ хывмала. Ку республикре пурнакан кашни çын пуçне вĕренÿ йенĕпе çеç 68 тенкĕ расхутлани пулать.

Сывлăха сыхлав ĕçĕсене тунă çĕре иртнĕ çулта 16689 пин тенкĕ хывнă, кăçал 21673 пин тенкĕ хывма палăртнă. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан 29,8 процент ÿсет.

Кăçалхи çул епĕр бÿджет тăрăх шкулсене хыттăн лайăхлатмала тăватпăр. Тулли мар вăтам шкулсенче 5—7-мĕш классенче вĕренÿ расхучĕсем ваљљи иртнĕ çулта кашни класа 140 тенкĕ панă, кăçал 226 тенкĕ паратпăр, вăтам шкулсенче 8—10-мĕш классене кашнине 529 тенкĕшер паратпăр. Çак укçа-тенкĕпе уçă курса шкулсенчи вĕренмели оборудованисене тĕпренех лайăхлатма пулать. Ĕçе чăнласах лайăхлатмашкăн епĕр вĕренмели оборудованисене хатĕрлессине пĕр организаци урлă туса пыма шутлатпăр.

Кăçал шкулсене хуçалăх йенчен пулăшассине те хытă лайăхлатмала. Иртнĕ çулта пĕр клас ваљљи хуçалăх расхучĕсем 300 тенкĕ панă, кăçал 565 тенкĕ паратпăр, вăл шутран кашни пĕр клас ваљљи сутăшăн тÿлеме 40 тенкĕ, пĕчĕк йусав ĕçĕсене тума 40 тенкĕ, тасалăх тытма 25 тенкĕ, вутă илме 330 тенкĕ тата хаçат-журналсем çырăнса илме 120 тенкĕ паратпăр.

1938 çулти бÿджетпа халăх хуçалăхĕн тата куђтурă строительствин пур йенĕсем тăрăх та ĕçсене лайăхлатма май панă. Пирĕн задачă вăл бÿджета доход йенĕпе те çавнашкалах расхут йенĕпе те çирĕппĕн пурнăça кĕртмеле тăвасси пулать. Укçа-тенкĕне расхутланă çĕрте питĕ çирĕп дисциплинă кирлĕ. Çапла вара, йулташсем, пирĕн кăçал халăх хуçалăхĕ ÿснĕ тата ĕççыннисен пурнăçĕ лайăхланнă май республик умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлас йенĕпе чăн-чăн бођшевикла çирĕп утăм тумала.

Партин Тĕп Комитечĕ, Сойуз тата федераци правительствисем, Сталин йулташ пирĕн республик халăх хуçалăхне, куђтурине çĕклеме питех пысăк пулăшу параççĕ. Ĕç пирĕнте çеç йулташсем.

1938 çулти планра ленинла-сталинла наци политикĕн тупсăмĕ питех те конкретлăн, уççăн курăнса тăрать.

Сталин йулташ калать:

„РСФСР-че наци ыйтăвĕн тупсăмĕ—национађнăçсен кайа йулнăлăхне (хуçалăх, политикă, куђтурă тĕлĕшпе), пире кивĕ самантран йулнăскерне, пĕтересси, кайа йулнă халăхĕсене государствă, куђтурă тата хуçалăх тĕлĕшпе те центрти Российăна хуса çитме май парасси пулать".

Ленинпа Сталин политикине тÿррĕн пурнăça кĕртсе пыни совет влаçĕ пулнăранна 20 çул хушшинче Чăваш республикне чечеклĕнекен промышленнăçлă тата йалхуçалăхлă çĕршыв пулса тăма май пачĕ. 1938 çулта халăх хуçалăхăн пур отрăçлисене те тата куђтурăна малала пысăккăн ÿстерессине пурнăça кĕртетпĕр.

1938 çулти план, ĕçсен пысăккăшĕ улшăннине çакна май йертсе пырас ĕçĕн задачисем улшăннине пĕлтерет. Кивĕлле ĕçлеме йурамасть. Йалхуçалăх налогĕ пухас, страховани укçи пухас—йе тата плошчĕтра алăк,пĕртен пĕр алăк тунă чухнехи пек меслетсемпе тата майсемпе çеç ĕçлеме йурамасть. Парти тата совет организацисен те çÿлтен пуçласа айала çитиччен çĕнелсе урăхланмала.

Парти организацисенчен хăшпĕрисем тата парти организацисен районсенчи хăшпĕр руководителĕсем хуçалăх ыйтăвĕсемпе йертсе пырас ĕçрен пăрăнса тăнине татăклăнах пĕтермеле.

Сталин йулташ çапла вĕрентет:

„Пирĕн партири йулташсем хуçалăх ăнăçувĕсемпе каçса кайса, политикăран пăрăнса пыни—ку вăл пире хакла ларнă хăрахйенлĕх пулнă. Халĕ пирĕн хăшпĕр йулташсем вара, партилĕ политикăлă ĕçе вăйлатма тытăнса хуçалăхран пăрăнма шухăш тытсан,—ку вăл тепĕр хăрахйенлĕх пулĕ, вăл ĕлĕкхинчен кайа ларĕ. Пĕр йенчен тепĕр йенне кайса çапăнма йурамасть. Политикăна хуçалăхран уйăрма йурамасть. Епĕр политикăран пăрăнма пултарайман пекех, хуçалăхран та пăрăнма пултараймастпăр. Тĕпчесе вĕренме меллĕрех пултăр тесе, çынсем йалан пекех, хуçалăх ыйтувĕсене политикă ыйтувĕсенчен методологи тĕлĕшпе уйăрса илеççĕ. Анчах ăна методологи тĕлĕшпе кăна, йури тĕпчесе вĕренме меллĕрех пултăр тесе кăна, тăваççĕ. Пурнăçра йалтах урăхла, практикăра политикăпа хуçалăха пĕрпĕринчен уйăрма çук. Вĕсем пĕрле пурăнаççĕ, пĕрле пыраççĕ. Пирĕн политикăлă практикăра хуçалăха политикăран уйăрма шухăшлакан, политикла ĕçе пĕчĕкке хурса хуçалăх ĕçне вăйлатма йе, пĕтĕмпех урăхла, хуçалăх ĕçне пĕчĕкке хурса политикăлă ĕçе вăйлатма шухăшлакан çын—вăл пурпĕрех тупикне лекет".

Сталин йулташ ВКП(б)Парти Тĕпкомĕн 1937 çулти февралпе март уйăхĕсенче пулса иртнĕ пленумĕнче панă çак кăтартусем халĕ те пурнăçлă, вĕсем пире тÿрĕмĕнех тивеççĕ.

Хађхи вăхăтра пирĕн тĕп задачă, ман шутпа, Халăх комиссариачĕсене, хуçалăх организацисен центрти учрежденисене хăйсен предприйатийĕсене, стройкăсене йертсе пыракан чăн-чăн производствăлă-техникăлă штабсем туса хурасси, вĕсене чăнласах халăх комиссариачĕсем тăвасси пулать. Вĕсен савăтсемпе, стройкăсемпе кулленех предприйатиенче мĕн тунине пĕлсе пырса, вĕсен ĕçне оперативлă илсе пымала. Хађхи вăхăтра çавнашкал тăвасси халăх комиссариачĕсенче çук-ха.

Хуçалăх тата куђтурă ĕçĕсен задачисен пысăкăшĕ пĕтĕмĕшле ÿснĕ май, советсен хулари, çавнашкалах йалти ĕçсене лайăхлатас ыйту та çивĕччĕн тухса тăрать. Пирĕн йулашкинчен халĕ пурнăç тĕпренех улшăннине ăнланса илмеле. Хуçалăх тата куђтурă ыйтăвĕсенчен нумайĕшне советсен хăйсенех тумала, кам та пулин туса парассине кĕтсе тăмала мар. Мĕнле пулнă-ха ку йенĕпе ĕлĕкрех пирĕн ĕçсем?

(Йулашки 4-мĕш страницăра).

Л. С. СПАСĂВ йуташ доклачĕн йулашки

Тĕслĕхшĕн Çĕмĕрлене илер. Предприйатисен директăрĕсен ĕлĕкрех савăт ĕçĕпе савăта йертсе пырас ĕçсене туписĕр пуçне, столовăй организацилес, çăрулми тата пахча-çимĕçсем лартас, таварсем кӳрсе килес т. ыт. ĕçсене те тумала пулнă. Предприйати директăрĕсен рабочисене хватерсем парас, кулӡтурă ĕçне йĕркелес, театрсем, концертсем организацилес т. ыт. ĕçсене болӡницă ĕçĕсен пайне медикаментсем тупса парса врач тупасси патне çитичченех, тĕрлĕрен вак-тĕвек ĕçсене тумала пулнă.

Паллах, ун чухне Çĕмĕрле хула совет председателне ĕçлеме çăмăл пулнă. Анчах вăл хула советĕнче хуçайствă ĕçне пĕлекен çынсем сахал пулнă вăхăтра пулнă, вăл кооперацинче суту-илӳ ĕçне пĕлекен çынсем сахал пулнă вăхăтра пулнă, вăл кулӡтурă ĕçĕнче ăнланакансем çителĕксĕр пулнă вăхăтра пулнă. Халĕ, предприйатисенче производствăна йертсе пырас йенĕпе тăракан задачăсем йăвăрланнă вăхăтра, директăрсен савăтра пумайрах ĕçлеме лекет, халĕ ĕнтĕ пур çĕрте те пулма йăвăр. Халĕ тата хуçалăх ĕçĕнче опытлă çынсем те нумайланчĕç.

Пĕр çăмахпа каласан, пурĕн те рабочисене кулӡтурăпа йăла йенчен пулăшассин нумай пайĕсем хуçалăхлă организацисенчен советсен аллине куçма кирли çинчен калаççĕ. Советсен çавсене тăвассишĕн çине тăрса ĕçлеме тытăнмала. Советсен хулара суту-илӳ ĕçне лайăх организилессишĕн, столовăйсенче, ресторансенче, буфетсенче, чайнăйсенче ĕçе лайăхлатассишĕн, рабочисен ачисем валӡӡи шкулсем, учебниксем, вĕренмели хатĕрсем тата ыттисене те çителĕклĕ тупса парассишĕн, клуба, библиотекăна, кинона, радиона лайăх ĕçлеттерессишĕн, болӡницăри, ача çуратмалинчи, ачасĕн сачĕсенчи ĕçсене лайăхлатассишĕн, рабочисене хватерсем кирлĕ таран тупса парассишĕн, пурăнмали çуртсене кирлĕ пек тытса усрассишĕн, рабочисен йăла условисене лайăхлатассишĕн, урамсене йĕркелĕ тата тасалăхра тытассишĕн, чĕркуççи таран пылчăк çинче çӳрессине пĕтерессишĕн, хулана сутă çителĕклĕ тăратассишĕн т. ыт. те тăрăшмала. Советсенчен çавсене пурнăçа кĕртме ыйтаççĕ, ĕççыннисен пурнăçĕпе йăла условисене тата кулӡтурлăхне ӳстерес йенĕпе тăракан задачăсем. Çавсене пурнăçа кĕртме ыйтаççĕ советсенчен суйлавçăсем. Анчах ку вăл директăр ĕçсенчен пăрăнса тăмала тенине пĕлтермест, директăр та вăл ĕçсене тăват, çапах та рабочисене лайăх кулӡтурăпа йăла условисем туса парассишĕн советсем ответлă.

Райĕçтăвкомсем тата йалсоветсем пирки каласа, епĕ çакна палăртасшăн: хăшпĕр райĕçтăвкомсемпе йалсоветсем, епĕ хăшпĕрисем тетĕп, районăн тата йалăн хуçалăхпа кулӡтурă строителствинчен сывăхра мар, айакра тăни тĕрĕс мар пулат. Хăшпĕрисем шутлаççĕ: сӡот иртернĕ, вăл сӡотра вăрăм сăмахсем каланă, çавăнпа ĕçе пĕтернĕ те. Ку пысăк йанăш. Конкретлă ĕçсем тумасăр, кашни районра тата йалта конкретлă ĕçлемесĕр ĕç тухмаст. Халăхăн ыйтăвĕ калама çук пысăккăн ӳсние ăнланса илес пулат. Халăх лайăх библиотекă, клуб, вулав çурчĕ тытасшăн, радио итлесшĕн, лайăх кино курасшăн, халăх болӡницăсене лайăх ĕçлеттерме ыйтат, йалпоçа лайăх ĕçлеттерме, унта таварсем çителĕклĕ тăратма ыйтат т. ыт. те. Халăхăн ыйтăвĕсем те нумай, вĕсем питех те пысăк, вĕсене веçех пурнăçа кĕртмеле. Çак ĕçсем вĕсем райĕçтăвкомсемпе йалсоветсен ответлăхĕ çинче тăраççĕ.

Еçĕп пур облăçĕсенче те сăтăрçăсен йулашкипе пĕтересси плана тултарассин никĕсĕ пулса тăмала. Социалисăмла ăмăрту тата стаханăвлă йухăм сарасси, малта пыракан рабочисен—стаханăвĕçсен опытне предприйатисенчи, транспăртри, йалхуçалăхĕнчи тата хамăр стройкăсенчи рабочисен пĕтĕм массисен хушшинче сарса пырасси ĕçĕн тĕп меслечĕ пулмала. Совет, парти тата ытти организацисен задачисем стаханăвла йухăмпа социалисăмла ăмăртăва, вĕсем хăй тĕллĕн малала кайма пултăрманнине асра тытса, чăнласа йертсе пырассинче пулаççĕ.

1938 çулти плана тултарасси укçатенкĕ нумайрах мобилизацилеме, финанс хуçалăхне çирĕп организацилеме, бӳджета çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пыма ыйтат, унсăрăн нумай ĕçсене тăвасси хăрушлăха кĕрсе ӳкме пултарат.

Пирĕн пĕтĕм ĕçре пысăк организацилĕх пулмала. Апла тума тимлесе ĕçлени, ĕçре çирĕп дисциплинă пулни кирлĕ.

1938 çул, виççĕмĕш пйатилеткăн пĕрремĕш çулĕ, пирĕн ӳмра промышленнăçпа кулӡтурă строителствине малашне те вăйлатсах пыма пысăк çулсем тата майсем уçса парат. Пирĕн кăçалхи плана палăртнисене пурне те пурнăçа кĕртмеле тăвассишĕн тăрăшмала.

Халăх тăшманĕсем пире чăрмантарма тăрăшаççĕ, вĕсем плана тултарассине пур майсемпе те чăрмав кӳме пикенеççĕ, çавăнпа пирĕн сыхлăхлă, сисĕмлĕхлĕ пулмала, троцкисла-бухаринла елементсене буржуалă-националиссене, çавнащкалах тата ыттисене те пĕр хĕрхенмесĕр çĕмĕрсе тăкса, хамăр çул çинчен тасатса пымала.

Пирĕн хамăрăн партипе комсомол организацисене пурне те, рабочисене тата служăщчисене, колхозниксемпе колхозницăсене пурне те тата хамăр республикăри пĕтĕм ĕççыннисене пирĕн парти тавра, халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ тавра тата та тачăрах пĕтĕçме чĕнсе, руспублик умне лартнă задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырассишĕн болӡшевикла кĕрешĕве вăйлăн сарса пымала. Атăр йулташсем, çăнăсене таварса ĕçлер,—Сталин йулташ, Молăтăв йулташ тата хамăрăн парти Тĕпкомĕ чăвашсем начар ĕçлемеççĕ, лартнă задачăсене пурнăça кĕртме пĕлеççĕ, тесе калама пултарччăр. **(Алă çупаççĕ).**

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн Х-мĕш Çеççийĕ хупăнчĕ

Апрелĕн 6-мĕшĕнчи ирхи лару

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн Х-мĕш çеççийĕн апрелĕн 6-мĕшĕнчи ирхи ларăвĕнче Чăваш АСС Республикĕн 1938 çулхи бӳджечĕ çинчен И. З. Захарăв йулташ доклад туса пачĕ. Захарăв йулташ доклачĕ хыççăн Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председател заместителĕ ССРС Верховнăй Совет депутачĕ П.Д. Краснов йулташ Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕн Бӳджет Комиççин содокладне туса пачĕ. Содоклад хыççăн пренисем пуçланчĕç. Пренире çак йулташсем тухса каларĕç: Таврин (Финанс халăх комиссариачĕ), Шумилăв (Социаллă обеспечени халăх комиссариачĕ), И. Филиппăв (Шупашкар, крахмалтрест), Орепин (Государствă банкĕ), Ларионăв (Турхан районĕ).

Апрелĕн 6-мĕшĕнчи каçхи лару

Апрелĕн 6-мĕшĕнчи каçхи ларура И. З. Захарăв йулташ доклачĕпе П. Д. Краснов йулташ содоклачĕ тăрăх пренисем пычĕç. Пренире çак йулташсем тухса каларĕç: Ф. Степанăв (Апат-çимĕç промышленнăç халăх комиссариачĕ), Каштанăвă (Патăрйел районĕ), Косăрĕв (Шупашкар хули), Платонăв (Перекет кассисен управленийĕ), Чернов (Сывлăх халăх комиссарĕ), Павлăв (Вăрман промышленнеçĕн управлӡайушчийĕ), Свешникăв (физкулӡтурă комитечĕ), Берзин (йалхуçалăх институчĕ).

Берзин йулташ хыççăн Чăваш АССР Халăх хуçалăхĕн 1938 çулхи планне ăнăçлăн пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе республикă умĕнче тăракан задачăсем çинчĕн ПСК(б)П Обкомĕн пĕрремĕш çекретарĕ Г. ИВАНОВ йулташ сăмах тухса каларĕ. Çакăнпа иккĕмĕш ыйту тăрăх пренисем пĕтрĕç.

Л. С. СПАСĂВ йулташ пренире тухса калакансем правителствă умне лартнă хăшпĕр ыйтусене йепле пурнăçа кĕртмели çинчен татăклă ответсем пана хыççăн, Çеçси Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комтет Президиумĕ йышăннă постановленисене çирĕплетесси çинчен Т.В. ВАÇИЛЙЕВ йулташ докладне итлесе, постановленисене çирĕплетрĕ.

Пĕрремĕшпе иккĕмĕш ыйтусем тăрăх резолӡуцисем йышăнса Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн Х-мĕш Çеççийĕ хăйĕн ĕçĕсене пĕтерчĕ.

Азербайджан искусствин вунăкунлăхĕ Мускавра

Вунăкунлăх уçăлни

Спектаклӡре И. В. Сталин, В. М. Молотăв, Л. М. Каганович, А. А. Жданăв йултăшсем пулнă

Апрелĕн 5-мĕшĕнче ССР Сойузĕн Ленин орденлĕ Государствă Академилĕ Пысăк театр филиалĕнче Азербайджан искусствин Мускаври вунăкунлăхĕ уçăлнă.

Азербайджансен М. Ф. Ахундăв йачĕпе тăракан оперăпа балет государствă театр коллективĕ Азербайджан ССРеспубликĕн халăх артисĕ—композитăр Уз. Гаджибекăв çырнă „Кĕр-Оглы“ йатлă паттăр халăх оперине кăтартнă.

Азербайджан ССРеспубликĕн тава тивĕçлĕ артисĕ талантлă режиççор И. Идайат-Заде йертсе пынипе лартнă спектаклӡ калама çук пысăк ăнăçлăхпа иртнĕ. Кĕр-Оглы çинчен Азербайджан халăхĕ тунă епăсăн чаплă образĕсем çак идейăлă ăшчикĕ йанчен чаплă оперă музыкĕпе тарăнăн пĕрлешсе тăраççĕ.

Спектаклӡ куракансене Нигйар ролӡне пит паха вылӡакан Кнарик Григорйан артистка тата Кĕр-Оглы ролӡне вылӡакан Аз. ССР тава тивĕçлĕ артисĕ Бӳлӡ-Бӳлӡ пуринчен те ытларах кăмăла кайнă.

Массăлă сценăсемпе халăх ташшисем çав тери паха пулнă. Балет соластки Гамер Алмаз-Заде ăнăçлăн йурласа панă.

Р. Мустафейĕв художник спектаклӡ валӡӡи паха декораци хатĕрленĕ. Оперăна çамрăк дирижор А. Краснов йертсе пынă.

Вунăкунлăх уçăлнă çĕрте И. В. Сталин, В. М. Молăтăв, Л. М. Каганович, А. А. Жданăв йултăшсем пулнă.

Оперă пĕтнĕ хыççăн Сталин йулташ тата партипе правителствă руководителĕсем спектаклӡ курма пынă мĕн пур çынсемпе пĕрле спектаклӡре вылӡакансене хĕрӳлĕн саламланă.

(ТАСС).

Китайри вăрçă

(Вăрçă ĕçĕсене пăхса тухни)

Китайри вăрçă тăххăрĕмĕш уйăх пырат. Китайа мĕлйун çар тата пит нумай самолӡотсем, танксем тата артиллери йанă Йапони захватчикĕсем, Çурçĕр Китайра Хебей, Шаӈдун тата Шаӈси провинцисен пысăк пайне, Центрти Китайра суту-илӳпе промышленнăçлă пысăк района—Шанхай, Нанкин, Ханчжоу хулисене туртса илчĕç. Анчах çакна пăхмасăрах йапонĕçсем Китай çарне çапса аркатма тата Китай халăхĕн хăйĕн ирĕклĕхĕшĕн кĕрешес кăмăлне хуçма пултараймарĕç.

Йапони захватчикĕсене хирĕç, хăй никама та пăхăнса тăрас марришĕн кĕрешме пĕтĕм Китай халăхĕ çĕкленчĕ. Мĕн пур провинцисенче халăха çар ĕçне вĕрентесси массăлăн сарăлса кайрĕ. Пур çĕрте те самооборонă отрйачĕсем шăтса тухаççĕ. Йапонĕçсем туртса илнĕ провинцисенче пит нумай партизан отрйачĕсем организиленеççĕ.

Халӡхи вăхăтра вăрçă ĕçĕсем çĕнĕ тапхăра кĕчĕç. Китай çарĕсем оборонăран активлăн тапăнса пырасси çине куçаççĕ, йапонĕçсене умлă-хыçлăнах тытатыта тăпăлтараççĕ.

Йулашки уйăхсенче вăрçă операцийĕсем Çурçĕр Китайра, пуринчен ытла, Шаӈсипе Шаӈдун провинцисенче пулса иртрĕç. Кăçалхи йанвар уйăхĕнче Йапони командованийĕ Ťаӈцзин—Пукоу чукунçулĕн çурçĕр участкинче Шаӈдун провинцинче наступлени тăвассине сарса йачĕ, çапла тунипе Çурçĕрти тата Центрти Китайра тăракан Йапони çарĕсене пĕрлештерессшĕн пулнă. Анчах та Китай çарĕсем икĕ уйăх çурă хушши йапонĕçсен мĕн пур атакисене ăнăçлăн сире-сире пычĕç.

Март уйăхĕн варринче, техникăпа вăйлăн хĕçпăшаллантарнă çĕнĕ вăйсем илсе пырса, йапонĕçсем çĕнĕрен наступлени тума тапратрĕç, вĕсем Çуйчжоу патне (Ťаӈцзин—Пукоу тата Лунхай чукунçулĕсем пĕрлешнĕ çĕрти стратегилĕ пункт) тухасшăн пулчĕç. Танксемпе авиаци пулăшнипе, йапонĕçсем Китай фронтне татса кĕчĕç, Тенçанпа Лиӈчане туртса илсе Хаӈчжоуан патнех çитрĕç. Анчах та вĕсем тапăнса пырассине кунта чарса лартнă. Китай командованийĕ çак участкăна пысăк вăйсем йарса контрнаступлени тума пуçланă. Китай çарĕсен пĕр пайĕ йапонĕçсен тылне кĕрсе кайса, вĕсен Ťаӈцзин—Пукоу чукунçул тăрăх чакмали çулне пӳлсе лартнă.

Çак районра халӡ те çапăçусем пулса пыраççĕ. Китай çарĕсем йулашки кунсенче кунта Йапонин икĕ полкне пĕтерсе хунă, çĕршер çын тыткăна çавăрса илнĕ, пит нумай хĕçпăшалсем, вăл шутран артиллерипе танксем те туртса илнĕ.

Шанхай фронтĕнче йулашки уйăхра пысăк çапăçусемех пулман.

Китайри вăрçă пуçланнăранпа йапонĕçсен вилсе тата амансa 280 пин çын пĕтнĕ. Китайри вăрçă валӡӡи Йапони 4 мĕлйард ийена йахăн укçа ресхутланă та ĕнтĕ.

Китайри вăрçă ĕçĕсем мĕнле пыни Китай халăхĕ йапонĕçсем тапăнса пынине чарса лартма çеç мар, тата хăйĕн çĕршывне Йапони захватчикĕсен малашне те тасатса пыма пултарнине кăтартса парат.

(ТАСС).

Планран иртерсе

Йулашки кунсенче ССРС Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариатне апат-çимĕç промышленнăç предприйатисем пĕрремĕш квартăл планне иртерсе тултарни çинчен пĕлтернисем нумай пыраççĕ.

Главсахăр квартăл планне 123,3 процент тултарнă, планран иртерсе 11 мĕлйун пăта йахăн сахăр песокĕ туса кăларнă.

Главконсерв плана 116 процент тултарнă, программăра пăхнинчен 26 мĕлйун банкă ытларах конçерв туса кăларнă.

Главпарфӳмер хапрăкĕсем программăран иртерсе 7 пин тонна йахăн супăӈ тунă.

Мускаври, Ленинградри, Бакури тата ытти аш-какай комбиначĕсем какай тăрăх плана 8 пин тоннă иртерсе тултарнă.

Çавăн пекех тата кондитĕр, çăкăр, чей, сĕт, пулă тата апат-çимĕç промышленнăçĕн ытти отрăçлĕсен предприйатийĕсем те квартăл планне иртерсе тултарни çинчен пĕлтереççĕ.

(ТАСС).

Партин йертсе пыракан оргăнĕсене суйлама хатĕрленни

Мускаври, Кийĕври, Калининри, Йарославлӡри т.ыт. хуласенчи парторганизацисенче партин йертсе пыракан оргăнĕсене суйлама хатĕрленес ĕç анлăн сарăлса кайнă.

Кирăв йачĕпе тăракан „Динамо“ савăтри парторганизаци (Мускав) апрелĕн 8-мĕшĕнче йертсе пыракан органсене суйлама пуçлат. Халӡхи вăхăтра парти ушкăнĕсенче тата цехсенчи парти организацисен пухăвĕсенче ПСК(б)П Тĕпкомĕн постановленине тата суйлавсем иртермели инструкцине сӳтсе-йаваççĕ. Коммуниссене партком ĕçĕпе паллаштарма савăтри Парти Комитечĕн членĕсене цехсенчи парти организацисем çумне çирĕплетнĕ.

Сталин йачĕпе тăракан автосавăтра отчот çырнă çĕрте парткома пулăшу пама штатра тăман 15 инструктăра уйăрнă, вĕсем цехсенчи активпа пĕрле цехсенчи парти организацисен ĕçне тĕрĕслеççĕ.

Партин Калинин хула комитечĕпе райкомсем партин пуçламĕш организацийĕсене суйлав иртернĕ çĕрте пулăшма тесе парти активĕнчен 240 çын уйăрнă.

Полеçйе облăçĕнче (Белоруççи) суйлав пухăвĕсем пуçланиччен пуçламĕш парторганизацисенче пуринче те парти кунĕсем туса иртереççĕ, вăл кунсенче суйлава хатĕрленесси çинчен сӳтсе-йаваççĕ.

(ТАСС.)

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсем Германи Австрине тытса илнине йышăннă

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен государствă департаменчĕ (йут çĕршыв ĕçĕсен министерстви) Германине вăл Австрийе тытса илнĕ пирки панă нотăн тĕп шухăшне пичетлесе кăларнă. Вăл нотăра çапла каланă: Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче Германи Австрийе çăтса йанине „пулса иртнĕ факт“ тесе йышăнаççĕ тата Германи халӡ Австрин Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штачĕсене тӳлемели парăмсемшĕн ответлă,—тенĕ.

Государствă департаменчĕн представителĕсем журналиссемпе калаçнă чухне çапла пĕлтернĕ: Австри никама пăхăнса тăман государствă пулса пурăнма пăрахнă фактпа Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен ирĕксĕрех килĕшмеле. Анчах та вăл вăйпа ирĕксĕрлесе тунă территорилĕ улшăнусем тĕлĕшпе Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен политикинчен чакни пулмаст.

(ТАСС).

Австрири террор

ЖЕНЕВА. (ТАСС). „Базлер Нахрихтен“ хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Австрин Шушниг йертсе пынă правителствă членĕсем пулнисене чылайĕшне тата „Отечественнăй фронт“ руководителĕсене апрелĕн 1-мĕшĕнче Венăран Дахаури концентрацилĕ лагĕре илсе кайнă, вĕсене çар хуралĕ сыхласа пынă.

Англипе Франци правителствисене Испани нотă панă

Апрелĕн 6-мĕшĕнче, Испани республикĕн Лондăнри посолĕ Англии йут çĕршыв ĕçĕсен министерствине республикăлă Испани правителстви валӡӡи хĕçпăшалсемпе вăрçă хатĕрĕсене ирĕклĕн илмели правана тепĕр хут тума ыйтса нотă панă.

Çав вăхăтрах, çавăн пек нотăна Испани Парижри посолĕ Францин йутçĕршыв ĕçĕсен министерствине те панă.

(ТАСС).

КРАÇÇИН ÇУТАСЧĔ!

Чăваш республикĕн Суту-илӳ халăх комиссариатне çакнащкал телеграммăсем килеççĕ:

— Краççинсăр ларатпăр...

Çакăн çинчен республикăри кашни район: Шăнкăртам, Патăрйел, Йĕпреç тата Турхан пĕлтерет. Тутаркас, Шупашкар, Ишлей районĕсенчен Шупашкара краççин илме йатарласа кашни кун темиçе çын килсе кайат. Кашнин пĕр ыйту:

— Сутмалăх краççин тупса илесчĕ.

Март уйăхĕнчен вара республикă краççинсăр ларат.

1938 çулхи пĕрремĕш квартăлта республикăна валӡӡи 1300 тоннă краççин уйăрса панă. Çак фондран 831 тоннă кăна сутнă. Уйрăмăн март уйăхĕнче 300 тоннă, апрел уйăхĕнче 100 тоннă уйăрса панă фонд усă курмасăр выртат. Краççин фондне уйрăм районсем тăрăх валеçнĕ. Апла-тăк республикăра краççин çителĕклĕ пулмала.

Кун хыççăн ĕнтĕ пĕр ыйту тухса тăрат.

— Аçта краççин?

Тĕп нефт тытăмĕн Горкий хулинчи кантурĕн Чăваш республикĕнчи уполномоченнăйĕ Шчипакин йулташ республикăна валӡӡи краççин çителĕклĕ тăратайманнишĕн хăйне айăплă шутламаст. Вăл: „базăсенче краççин çук, çавăнпа краççинсăр ларатпăр“, тесе калапипе витĕнсе йулма тăрăшат.

Сăлтавĕ пачах унта мар. Уйрăмăн илсен, Шупашкарти нефт базин хăйĕн Шупашкара валӡӡи краççин кӳрсе килмеле пулсан, вăл краççин илес тĕкенсене таçти айакри базăсенчен кӳрсе килме сĕнет. Суту-илӳ халăх комиссариачĕн апрелĕн 1-мĕшĕнчи распорйаженийĕ тăрăх, Чебторг Шупашкарти нефт складĕнчен март уйăхĕнчи фонд шучĕпе 30 процент краççин пама ыйтнă. Нефт бази хăйĕн складĕнче краççин çуккине кура, ăна Сĕнтĕрвăррине кайса кӳрсе килме хушат. Анчах... Сĕнтĕрвăрри хăй те тĕттĕм çĕрте ларат.

Халӡхи вăхăтра нефт базинчи краççина çураки иртерме машинă-трактăр станцисене панă, тейĕпĕр. Ун пек пулсан та, пур-пĕр, сутма краççин кирлĕ. Ку йенпе Суту-илӳ халăх комиссариачĕ хутсем кăна çырса ларат тата районсене краççин фончĕсем уйăрса ларат. Краççинĕ çук пулсан, нимĕнле фонд та уйăрса аппаланма кирлĕ мар. Малтан краççинне кӳрсе килмеле те, вара фонд уйăрса памала' çеқ туйăнат пирĕншĕн.

Шупашкарти нефт бази иртнĕ çул краççин çителĕклĕ кӳрсе килмерĕ. Вăл краççин тултарма баксем çукки çине печĕ.

Каç-каç тĕттĕм, Краççин çутасчĕ! Апла пулсан, ку йеннеле камăн та пулсан çавăрăнса пăхмала пулат.

Ив. Моçейĕв.

Питомник пулат

Çĕрпӳ районĕнчи Хутăр Шĕнерти „Венерă“ колхоз йал çумĕнче 10 гектар çĕр çинче питомник тума йышăнчĕ.

Питомнике чĕртме К. Йарукин агронома уйăрчĕç.

Питомнике Мичурин йăвăççисене—улмуççисем, чей çырли йăвăççисем, слива йăвăççисем т. ыт. те лартаççĕ.

Кунсăр пуçне питомник çумне пысăк пĕве пĕвелесе пулăсем ĕрчетеççĕ.

В. Прокопйĕв.

280 процент тултарчĕ

ШАХАСАН. Ĕççыннисен пурнăçпа условийĕсем лайăхланса пынă май, вĕсем хăйсен ытлашши укçине перекет кассине хурасси чылай ӳсрĕ. Акă районри перекет касси 1-мĕш квартăл планне 280 процент тултарчĕ.

Çак квартăлтах колхозсемпе колхозниксем хăйсен ирĕклĕ укçисене перекет кассине хурасси 53 процент ӳснĕ.

Чернов.

Х Р О Н И К Ă

◆◆ ССРС Верховнăй Совет Президиумĕ **А.В. Бакулин** йулташа Чукун-çул Халăх Комиссарĕн ĕçĕсенчен хăтарнă тата Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссарне **Л.М. Каганович** йулташа совместителствă йĕркипе Чукунçул Халăх Комиссарĕ тунă.

◆◆ ССРС Верховнăй Совет Президиумĕ **Ф.Ф. Расколӡникăва** ССР Сойузĕн Болгаринчи полномочнăй представителĕн ĕçĕсенчен хăтарнă.

Кăçалхи апрелĕн 3-мĕшĕнче ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председател заместителĕ В. Й. Чубарь Кремĕлре Халăх хуçалăх учочĕн республикăсенчи, крайсенчи тата облăçсенчи тырпул тухăçне шута илекен çектăрсен начальникĕсене йышăннă. Тĕштырăсен тата техникăлă кулӡтурăсен тухăçлăхне шута илес ыйтусем пирки пынă калаçура ССРС Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Ейхе йулташ, Совхозсен Халăх Комиссарĕ Йуркин йулташ хатĕрлевсен Халăх Комиссарĕ Попов йулташ тата ССРС Государствă План комиççин Халăх хуçалăх учочĕн Тĕп управлени началӡникĕ Саутин йулташ пулнă.

(ТАСС).

Ответлă редактăр Н. М СЕМЕНАВ.

ПĔЛТЕРНИ

Пайан, апрелĕн 8-мĕшĕнче, каçхине 5 сехетре Хресчен çуртĕнче Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармейĕçсен депутачĕсен Шупашкар хули совечĕн черетлĕ пленумĕ пулат.

КУН ЙĔРКИ:

1. Чăваш АССР халăх хуçалăхĕн 1938 çулхи планĕ.

Доклад тăваканĕ—Л. С. Спасăв йулташ.

2. Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармейĕçсен депутачĕсен Шупашкар хули совечĕн 1937 çулхи бӳджечĕпе усă курни тата 1938 çулхи бӳджечĕ çинчен. Доклад тăваканĕ И. И. Золотников.

3. Организацилĕ ыйтусем.

Хула совечĕн депутачĕсене, çекцисен членĕсене, депутат групписен, урам комитечĕсен членĕсене тата совет активне пленума пыма чĕнеççĕ.

„Чăвашкино“ трестне

саслă тата ахалӡ аппаратсемпе вырăнтан-вырăна çӳрсе ĕçлеме

киномеханиксем кирлĕ

Условисемпе паллашма трест кантурне пымала.

3—2

Академи театрĕнче

Апрелĕн 8-мĕшĕнче

ПРЕМЙЕРĂ

Чăвашла спектаклӡ

П. Н. ОÇИПĂВ

„АЙДАР“

(5 пайлă, прологлă)

Аслă режиççор

К. И. ИВАНОВ

тата режиççор

Н. С. АЙЗМĂН лартаççĕ.

Художник

Йе. Н. САПОЖНИКĂВ.

Спектаклӡре музыкăна Государствă филармонийĕ вылӡат.

Дирижор—Г. ЙЕГОРĂВ.

Талон № 160.

Абонемент № 10 талон № 15.

Кассă кăнтăрла 3 сехетрен уçă. Спектаклӡ каçхине 8 сехет те 30 минутра пуçланат.

Йăвăç çуракан тата йăвăç каскалакан рабочисен профсойузĕн Тĕп Комитечĕн

ИЛЙИНКĂРИ КАНМАЛИ ÇУРЧĔ

çак должнăççенче ĕçлеме йышăнат:

тухтăр, сестрасем, официанкăсем, кастелӡанщă, дачăсенчи уборщицăсем, çимĕç продуктисем тăратакан агĕнтсем, кухӡăра ĕçлекен работницăсем, повăрсем, пахчаç, кулӡтработник тата физкулӡтурник.

Ĕçлеме кĕрес текенсен алăра паспăрт тата йулашки вырăнта ĕçленĕ çĕртен илнĕ справкă пулмала.

Зайавленисене апрелĕн 25-мешĕччен çак адрĕспе памала: Шупашкар хули, Сойузсен çурчĕ, йăвăç çуракан тата йăвăç каскалакан рабочисен профсойузĕн Облăçри Комитечĕ Русин йулташа.

Апрелĕн 25-мĕшĕнче Сойуз Обкомĕнче зайавленисем тăрăх татăклă йышăну пулат. Майăн 3-мĕшĕ тĕлне йышăннисен ĕçе пымала.

2—1

„Чăваш Коммунĕ“ сырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 176. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 301. Тираж 16.250 экз. П. 6. 85—94 см. 1—1 п. л.